Пĕр №-рĕ 10 пус. 19-мĕш çул тухать.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1937 октябĕр 24 ВЫРСАРНИКУН 245 (4757)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Коммуниссемпе партире тăманнисен тачă çыхăнувĕ

Октаберĕн 20-мĕшĕнче суйлав кампанин çĕнĕ тапхăрĕ пуçланчĕ. Мускавпа Ленинградри шултăра заводсенче пысăк йышлă пухусем пулса иртрĕç. Çав пухусенче рабочисем, инженерсем, техниксем тата служащисем Сойуз Советне депутатсем суйлама кандидатсем тăратрĕç. Завод коллективĕсем кандидатсене пысăк хаваслăхпа тата пысăк ответлăх туйăмĕпе сĕнеççĕ. Ĕçхалăхĕн йышлă массисем, савăнăçлă праçнике пынă пек, музыкăсемпе, йурăсемпе пухусене пырса, совет çĕршывĕнчи государствă влаçĕн Аслă органĕсене суйламали кандидатсене тулли кăмăлпа тăратни пурне те çĕклен терсе йарат.

Мускавпа Ленинград завочĕсенче суйлав умĕнхи пухусем рабочисем, служащисем, интеллигенци партипе правителствă тавра пĕрлешсе тăнине кăтартакан хăватлă демонстраци, тăван çĕршыва чĕререн йуратнине тата Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйхала хурса ĕçленине кăтартакан хăватлă демонстраци пулса тăчĕç. Суйлав умĕнхи пухусем коммуниссемпе партире тăманнисем хушшинчи çыхăну çирĕппи çине, рабочи класăн авангарчĕпе рабочисен, служащисен, интеллигенци массисен паха пĕрлĕхĕ çине кăтартса параççĕ. Ку вăл кандидатсене тăратнă вăхăтра йар-уççăн палăрчĕ.

Мускаври Куйбышев йачĕпе тăракан електрокомбинатра Сталин йулташ кандидатурине партире тăман работницă Аннă Афанасийевна Славнова тăратнă. Опытлă конструкцисен заводĕнче Сталин йулташ кандидатурине партире тăман токар Федотов тăратнă. Газ заводĕнче Молотов йулташ кандидатурине партире тăман литейщик, ватă рабочи Иван Матвейевич Каскевич, Клара Цеткин йачĕпе тăракан фабрикра — партире тăман работница Леонова тăратнă.

Камсем вĕсем, рабочи пухувĕсен трибунисем çинчен хĕрӳлĕ те чĕнӳлĕ сăмахсем каланă активиссем? Вĕсем, социалисăмлă револуци пулнă хыççăн ӳссе çитĕннĕскерсем, совет влаçĕ пăхса çитĕнтернĕскерсем, пусмăр айĕнче пурăннă çынсенчен ирĕклĕ çын пулса тăнăскерсем, мăшкăл тӳссе пурăннă çынсенчен телейлĕ те мухтавлă çын пулса тăнăскерсем. Вĕсене Ленин—Сталин партийĕ çĕнĕ те телейлĕ пурнăç туса пачĕ, вĕсем совет государстви вĕсемшĕн тăрăшнине кашни утăмрах туйаççĕ, — вĕсем ĕнтĕ чĕререн йуратса, парти ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйран кĕрешме хатĕр тăрса болшевикла партипе совет правителствин руководителĕсене хăйсен кандидачĕсем пулма тăратаççĕ.

Мускаври Фрунзе йачĕпе тăракан заводри ватă рабочи Сомов хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă: „Чи пахи вăл, — епĕ ыранхи кун çине шанчăклăн пăхни. Епĕ, маншăн пирĕн парти тăрăшнине пĕлетĕп. Епĕ, маншăн пирĕн йуратнă туспа учитĕл Сталин йулташ тăрăшнине пĕлетĕп“.

Совет çĕршывĕнче, Сомов пеккисем, хăйĕн партине, совет влаçне чĕререн йуратакансем, — мĕлйуншар! Куйбышев йачĕпе тăракан електрокомбинатри работниксен пухувĕнче инженер Акимов пĕтĕм чĕререн ăшшăн та хумханса çапла каланă:

„Епĕ Сланова йулташ пирĕн партин çулпуçне Сталин йулташа Сойуз Совечĕн депутатне суйлама панă сĕнӳве пысăк савăнăçпа тата чĕре тулли кăмăлпа хута кĕретĕп.

Епĕ ку кандидатурăна ака мĕншĕн сĕнетĕп: Сталин йулташ Ленин вилнĕ хыççăн пирĕн партин пĕрлĕхне сыхлама тупатуса, ăна пурнăçа кĕртрĕ. Пирĕн парти чулту пек тăрат, троцкиссен тата ытти тăшмансен пĕтĕм ирсĕр ĕçĕсем çав чулту çине çапăнса саланса кайаççĕ. Епĕ Сталин йулташ кандидатурине ака мĕншĕн сĕнетĕп: вăл пролетари диктатурине çирĕплетме тупатуса, çавна пурнăçа кĕртрĕ.

Епĕ Сталин йулташ кандидатурине ака мĕншĕн сĕнетĕп: Сталин йулташ çĕршыва индустриализацилес лозунг пачĕ, епĕр çав лозунга пурнăçа кĕртрĕмĕр. Епĕ Сталин йулташ кандидатурине ака мĕншĕн сĕнетĕп: Сталин йулташ йертсе пынипе пирĕн парти сапаланчăк вак хресчен хуçалăхĕнчен пуйан пурнăçлă колхоз хуçалăхĕ туса хучĕ. Епĕ Сталин йулташ кандидатурине ака мĕншĕн сĕнетĕп: вăл пирĕн çĕршывăн оборонă пултарулăхне тĕреклетес лозунг лартса, ăна пурнăçа кĕртрĕ. Епĕ Сталин йулташ кандидатурине ака мĕншĕн сĕнетĕп: епĕр ĕлĕк капиталисăм пусмăрĕ айĕнче нуша тӳссе пурăннă, а халĕ епĕр ирĕклĕ ĕççыннисем“.

Акимов инженер сăмахĕ çав кун каланă чи паха сăмахсенчен пĕри пулнă. Çав сăмахсем пирĕн пысăкран та пысăк çĕршыври совет халăхĕ вĕçĕ-хĕррисĕр савăннине кăтартса параççĕ. Ростоври йалхуçалăх машинĕсем тăвакан заводри рабочисем, Сталин йулташа депутата суйлама кандидата тăратни çинчен пĕлсен, хăйсен саламлă телеграмминче ака мĕн çырнă: „Сталин йулташ кандидатурине сӳтсейавнă Куйбышев йачĕпе тăракан електрокомбинатри, Балакирев йачĕпе тăракан фабрикри тата ытти фабриксемпе заводсенчи рабочисен пухувĕсем çинчен çырнă отчотсене пĕтĕм ăшран савăнăçлăн хумханса вуларăмăр. Епĕр хамăр сасăмăрсене вĕсен сассисемпе пĕрлештеретпĕр. Сталин йулташа ССР Сойузĕн Аслă Советне кирек мĕнле округ суйласа йарсан та—вăл пĕтĕм ĕçхалăхĕн делегачĕ пулат“.

Мускавпа Ленинградри малта пыракан рабочи коллективĕсем, депутатсене суйлама кандидатсем тăратса, партиве хĕрӳлĕн йуратнине, халăхăн тата çĕршывăн руководителĕсене пĕтĕм чĕререн парăнса ĕçленине кăтартса пачĕç, ССР Сойузĕн Аслă Советне государствă ĕçĕн опытне туйаннă çынсене суйлама тăрăшнине палăртрĕç.

Сталин, Молотов, Калинин, Жданов йулташсене сĕннипе пĕрлех, Мускавпа Ленинградри завод коллективĕсем депутата суйлама ĕлĕкрех ахаль работницă пулнă, халĕ Мускав хулин Тагански район Совечĕн председателĕ пулса ĕçлекен Пичугинăна, малта пыракан рабочи-стахановеца, халĕ „Скороход“ фабрикĕн директорĕ пулса ĕçлекен Сметанин йулташа депутата суйлама кандидата тăратрĕç. Çĕршыв руководителĕсен йачĕсем тата ĕççынни массисенчен тухса ӳснĕ, пĕтĕм çĕршывĕпе паллă пулса тăнă çынсен йачĕсем пĕрле тăни,—пирĕн правителствă халăхпа тачă çыхăнса тăнине кăтартакан тепĕр чере теслĕх пулса тăрат.

Пичугинăпа Сметанин! Вĕсене Ленин—Сталин партийĕ хавхалантарса пынă, вĕсем стахановла ĕçре писĕхсе тĕреклечĕç, вăйхалне çирĕплетрĕç, рабочи класăн малта пыракан çыннисем пулса тăчĕç. Пирĕн тăван çĕршывăн хĕвелĕ айĕнче етемлĕх пултарулăхĕпе таланчĕсем тăвăллăн ӳсеççĕ. Совет çĕршывĕнчи кирек хăш гражданин та хăйĕн пултарулăхне туллин кăтартма пултарат. Пирĕн çĕршывра çын пурнăçĕн телейлĕ çулне ансат тупма пултартăр тесе тăрăшаççĕ. Ака мĕншĕн ĕнтĕ пирĕн сметаниисем, пичугинсем—халăхăн талантлă, ĕçхĕллĕ ывăлĕсем, тăван çĕршывăн мухтавлă патриочĕсем пиншерĕн те вуншар пинĕн шутланаççĕ.

Буржуалă парламентсене суйлама банкирсене, фабрикантсене, заводчиксене, çĕр хуçисене баллотировкă тăваççĕ. Туллин тултарнă укçа хутаççи пулăшнипе вĕсем сутăнчăк прессăна укçа парса, суйлавçăсене сутăн илсе, халăха улталаса ирсĕр ĕç тăваççĕ. Вĕсем буржуалă суйлав саккунĕпе, ĕççыннисене государствăн влаç органĕсене кĕме нимĕнле май та памаскерпе, усă курса, тĕрлĕрен тĕрĕсмарлăхпа государствăн влаç органĕсене хĕсĕнсе кĕреççĕ. Парламент креслисене йышăнса, çав „суйласа лартнăскерсем“ хăйсен вăйне пуçпулса тăракан классене улталла ĕç тума май парас, мĕн пур майсемпе капиталиссемпе помещиксен влаçне тĕреклетес, ĕçхалăхне пусмăрлассине вăйлатас çĕре йараççĕ. Фашисла çĕршывсенче, кирек мĕнле парламентарисăм йышшине те пĕтерсе лартнă çĕршывсенче, чăпăрка, чукмар, çакса вĕлермели пуçпулса тăракан çĕршывсенче, буржуази халăха чуралăх вăхăтĕнчи методсемпе „тытса тăрат“.

Совет Сойузĕнче халăх хăйĕн пурнăçĕпе хăй хуçа пулса тăрат, çынна хытă хисеплеççĕ, сывлăша капиталисăмăн тасамарлăхĕнчен тасатнă, сывлама çăмăл та ирĕклĕ. Çавăн пек çĕршыв тĕнчере урăх çук.

Депутатсене суйлама кандидатсем тăратакан суйлав умĕнхи пухусем пуçланчĕç çеç-ха, анчах малтанхи пухусен опычĕ те ĕнтĕ коммуниссемпе партире тăманнисем çирĕп çыхăнса тăнине, халăх массисен вăйлă патриотисăмне, халăх хăйĕн партине тата хăйĕн правителствине вĕçи-хĕррисĕр йуратнине кăтартса параççĕ.

Совет халăхĕ çирĕппĕн пĕрлешсе тăни—Аслă Совета суйлама çĕршывăн чи лайăх çыннисене кандидата тăратас, чи лайăх çынсене суйлас шанчăк парат.

„Правда“.

Пролетарилĕ столицăри суйлав умĕнхи канашлусенче

Октаберĕн 22-мĕшĕнче Мускаври Сталин, Молотов тата Пролетари суйлав округĕсенче Сойуз Совечĕн депутатне суйламали кандидатурăсене сӳтсе-йавма ĕççыннисемпе обществăлă организацисен представителĕсен суйлав умĕнхи канашлăвĕсем пулса иртнĕ. Суйлав умĕнхи канашлусем пит çĕкленӳлĕ иртнĕ. Пысăк предприйатисемпе организацисем йанă 2.850 представител Сойуз Совечĕн депутатне суйлама чи малтан тăратнă кандидатурăсене—халăхсен аслă çулпуçне Сталин йулташа, Совет правителствин пуçлăхне Молотов йулташа тата столицăри Таганск райсовет председателне Пичугина йулташа пурте пĕр саслăн хапăл тунă.

Сталин суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлура,—ку округра Куйбышев йачĕпе тăракан електрокомбинат, Балакирев йачĕпе тăракан фабрик тата ытти предприйатисен коллективĕсем Сталин йулташ кандидатурине тăратнă,—Совет Сойузĕн Геройĕ Михаил Михайлович Громов сăмах тухса каланă.

— Пирĕн çĕршыв çакă ырă,—тенĕ Громов,—кирек те мĕнле пысăк та хаваслă событи пулсан та, вăл обиязателнă чи ырă йатпа, пирĕншĕн чи хаклă йатпа—Сталин йулташ йачĕпе çыхăнса тăрат. Вăл—генилĕ çын, вăл хăйĕн пĕтĕм пурнăçне, хăйĕн пĕтĕм ăсне, хăйĕн пĕтĕм сывлăхне рабочи класпа хресченсене çĕнтерӳрен çĕнтерӳ патне, парти тата вăл, Сталин йулташ, илсе çитернĕ хальхи ырă пурнăçран та аванрах пурнăç патне илсе çитерме панă.

Манăн сире Сталин йулташ маншăн мĕн туни çинчен каласа парас килет. Майăн пĕрремĕшĕнчи парад умĕн епĕ вăйлă чирлерĕм, çапах та манăн ескадрилйе пуçĕнче „Максим Горьки“ самолот çинче вĕçмелеччĕ. Епĕ вĕçрĕм. Парад хыççăн парадра пулнисене пурне те Сталин йулташпа пĕрле правителствă йышăннă вăхăтра, епĕ пулаймарăм. Сталин йулташа епĕ йышăнура пулманни, епĕ питĕ чирли çинчен пĕлтерсен, вăл маншăн, мана сыватас тесе тата пайан епĕ çирĕпне каласмала тума мĕн кирлине пĕтĕмпех турĕ. Кăçал епĕ инçене вĕçессипе тĕнчере рекорд тума пултарнăшăн питĕ савăнатăп. Ку рекорда пĕтĕм Совет Сойузĕ турĕ, мĕншĕн тесен пирĕн çамрăк авиаци промышленнăçĕ болшевиксен партийĕ йертсе пынипе, Сталин йулташ йертсе пынипе ӳссе çирĕпленнĕ.

— Ман шутпа, Сойуз Совечĕн депутатне суйламали чи лайăх кандидатурă, чаплă кандидатурă тата пĕрремĕш кандидатурă пирĕн йуратнă, пирĕн хаклă Сталин йулташ кандидатури пулмала,—тесе вĕçлет хăйĕн сăмахне Громов йулташ, унăн сăмахĕсене залра хĕрӳлĕн алă çупса йышăнаççĕ.

Совет Сойузĕн Геройĕ сăмах каласа пĕтерсен, трибунă çине „Мастяжарт“ завочĕн партире тăман рабочийĕ Басов йулташ тухат. Вăл хăй умĕн сăмах тухса каланă предприйатисен тата обществăлă организацисен представителĕсен сĕнĕвĕсемпе килĕшсе:

— Епĕр пурте, пĕчĕккисем те, пысăккисем те, епĕр анчах та мар, тата пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем те аслă йата—Сталина пĕлетпĕр. Сталин йулташ хăй килĕшсен, вара епĕр пурте пĕр çын пек пулса Сталин йулташа ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлатпăр,—тет вăл.

Л. М. Каганович йачĕпе тăракан фабрик представителници партире тăман работницă Мйакотина йулташ хăйĕн хумханулă сăмахĕнче Сталин йулташа Совет хĕрарăмĕ тупнă телейлĕ, савăнăçлă пурнăçшăн хĕрӳлĕ тав тăват.

— Сталин йулташа Сойуз Совечĕн депутатне суйлама кандидата тăратса, епĕр хамăр суйлав участкинче ку кандидатурăшăн тăратпăр. Епĕр депутата суйлама хамăр тăратнă чи лайăх кандидатурăшăн Иосиф Виссарионович Сталиншăн сасăлатпăр,—тенĕ Мйакотина йулташ.

Молотов суйлав округĕнчи 850 çын пухăннă суйлав умĕнхи канашлува „Серп и Молот“ заводри валцовщик — стахановец Шчеголев йулташ уçнă.

— Епĕ „Серп и Молот“ завод пухăвĕнче тухса сăмах каларăм. Епĕ, ватă рабочи, Сталин йулташăн чи лайăх соратникне, чи лайăх болшевика Молотов йулташа депутата суйласа йама сĕнтĕм, — тесе пуçланă Шчеголев й. хăйĕн сăмахне.

Халăх хавасланса алă çупма чарăнсан, Шчеголев йулташ малала каланă:

— Епĕ, ватă рабочи, револуциччен чухăн пурăннă, халĕ çĕршывăн хуçи пулса тăратăп. Йулташсем, епĕр хамăрăн сасăсене тивĕçлĕ çынсемшĕн, пирĕн телейлĕ те ирĕклĕ çĕршыва сыхлакан çынсемшĕн паратпăр.

Трибунă çинче Молотов йачĕпе тăракан заводри стахановкă — работницă Богачева йулташ. Вăл уçă та сулăмлă сăмах калат. Вăл сăмах каланă хушăра темиçе хут та алă çупаççĕ. Вăл Сойуз Совечĕн депутатне суйлама Молотов йулташăн кандидатурине тăрассишĕн хĕрӳлĕ калат, канашлува пухăннисем пурте вăл каланине хавассăн йышăнаççĕ.

Богачева хыççăн Хрушчов йачĕпе тăракан завод рабочийĕ, Октабĕр тантăшĕ, Березин йулташ сăмах тухса калат. Вăл Совета пирвайхи хут çеç суйлат-ха. Вăл: — Нумай мĕлйунлă комсомолран Сталин йулташа телейлĕ пурнăçшăн спасибă! — тесе калат, ăна пĕтĕм зал пĕр харăс „урра“ кăшкăрса ответлет.

Березин йулташ хăйĕн завод коллективĕ йачĕпе лайăх ленинцăн, аслă Сталинăн сывăх тусĕн Молотов йулташăн кандидатуришĕн калат.

Канашлува пынисем „Манометр“ заводри 69 çулхи рабочи Громов йулташ сăмахне пысăк тимлĕхпе итленĕ. Унăн сăмахĕсене пысăк çĕкленӳпе алă çупса йышăннă.

— Историлĕ кунра — декабĕрĕн 12-мĕшĕнче, Молотов йулташăн мухтавлă йатне илнĕ пирĕн суйлав округĕнчи ĕççыннисем лайăх ленинцăшăн тата Сталин йулташăн тусĕшĕн сасăлаççĕ. Епĕр Молотов йулташран ССР Сойузĕн Аслă Советне столицăри Молотов суйлав округĕнчи баллотировкăра тăма килĕшме ыйтатпăр.

Пролетари суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлура пысăк предприйати коллективĕсенчен — Сталин йачĕпе тăракан автозаводран, Каганович йачĕпе тăракан подшипник тăвакан пĕрремĕш заводран, Киров йачĕпе тăракан „Динамо“ заводĕнчен, Микойан йачĕпе тăракан аш-какай комбинатĕнчен, коммунисла, комсомол тата обществăлă организацисенчен 1.300 представител пулнă.

Трибунă çинче оратăрсем пĕрин хыççăн тепри тухаççĕ. Вĕсем пурте Пролетари суйлав округĕнчи пысăк предприйати коллективĕсем тăратнă Прасковйа Никитична Пичугина кандидатуришĕн калаççĕ.

Мускаври велосипед тăвакан завод инженерĕ Рузин йулташ Сойуз Совечĕн депутатне суйлама халăхсен аслă çулпуçне, тăван тата йуратнă Сталина кандидата тăратма сĕнсен, залра хавасланса алă çупни нумай вăхăт хушши лăпланмаст. Пурте пĕр хаваслăхпа çĕкленсе ура çине тăраççĕ. Хавасланса алă çупни йанăрат, „урра“ кăшкăрнисем, саламланă сасăсем илтĕнеççĕ.

Столицăри Таганск тата Пролетари районĕсенчи МОПР организаци йачĕпе Медведева йулташ сăмах тухса калат. Вăл Прасковйа Никитична Пичугина кандидатуришĕн çине тăрсах калат.

— Тата епĕ Молотов йулташа кандидатурăна тăрататăп, — тет Медведева йулташ. Вăл Молотов йулташа кандидатурăна тăратнине хĕрӳлĕ алă çупса йышăнаççĕ. — Епĕр, Ленинăн тата Сталинăн чи лайăх соратникĕнчен, Молотов йулташран пирĕн патăрта Сойуз Совечĕн депутатне суйлама баллотировкăна тăма килĕшме ыйтатпăр, тет вăл.

Трибунă çинче лейтенант Поляков йулташ. Вăл Пролетари округĕнчи Хĕрлĕ çар чаçĕсенчи бойецсен, командирсен тата политработниксен йачĕпе сăмах калат.

Бойецсем, командирсем, политработниксем, — тет Поляков йулташ, — малта тăракан предприйатисенчи рабочисемпе служащисем етемлĕх генийне, пĕтĕм тĕнчери пролетариатăн çулпуçне, пирĕн чи лайăх туса тата учителе Сталин йулташа Сойуз Совечĕн депутатне суйлама кандидата тăратнине хапăлласа йышăнаççĕ: „Урра“ Сталин йулташа!

Саламлакан сасăсем „урра“ тесе вăйлăн кăшкăрнипе пĕрлешĕнеççĕ. Пурте хĕпĕртесе Сталин йулташа саламлаççĕ.

— Епĕр те, — тет малала Поляков йулташ, — Сталин йулташăн чи лайăх соратникĕсене, кристалл пек таса болшевиксене Молотов, Калинин тата Жданов йулташсене Аслă Советăн депутатне суйлама кандидата тăратни çумне пĕрлешетпĕр.

Красноармейцăсем, командирсем тата началство составĕ пурте пĕр саслăнах Таганск райсовечĕн председателне Пичугина йулташа Сойуз Советне депутата суйлама кандидата тăратни çумне хутшăнаççĕ.

— Красноармецăсен кăмăлне палăртса, Сталин йулташăн соратникне — Оборонăн хурçă пек çирĕп Наркомне, Совет Сойузĕн маршалне Ворошилов йулташа Сойуз Советне депутата суйлама кандидата тăратма сĕнетĕп.

Поляков йулташăн сĕнӳне пĕтĕм зал хĕрӳлĕн алă çупса, саламласа тата „урра“ кăшкăрса йышăнат.

Килхуçи хĕрарăм Романенко йулташ, Пичугина йулташăн кандидатури хутне кĕрсе, Сойуз Совечĕн депутатне суйлама кандидата Л. М. Каганович йулташа тăратат, — Л. М. Каганович йулташ, шанчăклă болшевик, кирек хăш постра та Октаберте кĕрешсе илнисене çирĕплетессишĕн çĕнтерӳлĕн кĕрешсе пырат. Романенко йулташ Йавăр промышленнăçăн мухтавлă Наркомне Сойуз Советне депутата суйлама сĕнӳ парсан, пĕтĕм зал Л. М. Каганович йулташа хĕрӳлĕн саламлат.

Микойан йулташ йачĕпе тăракан аш-какай комбинатĕнчи работницă-орденоноскă Никитина йулташ ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн Политбюро членне, ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместителне Микойан йулташа Совет Сойузĕн депутатне суйлама кандидата тăратат. Вăл панă сĕнӳве вăрахчен тата хĕрӳлĕн алă çупса йышăнаççĕ. Сталин йачĕпе тăракан автозаводри инженер-строител Битков йулташ Сойуз Совечĕн депутатне суйлама кандидата ССР Сойузĕн Шалти ĕçсен Халăх Комиссарне, çирĕп сталинцăна Йежов йулташа тăратат, учител Трубецкой йулташ Мускав болшевикĕсен йуратнă руководителне Хрушчов йулташа кандидата тăратат.

Суйлав умĕнхи вуçĕ канашлувĕнчĕ те пурте пĕр саслăн резолуцисем йышăннă тата суйлав участкисенче агитацилĕ массăлă ĕç тума шаннă çынсене суйланă, вĕсене канашлусем тăратнă кандидатсемшĕн тăма хушнă.

Сталин суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу халăхсен аслă çулпуçне Сталин йулташа Сойуз Советне депутата суйлама кандидата тăратнă. Молотов суйлав округĕнчи канашлу Совет правителствин пуçлăхне Молотов йулташа кандидата тăратнă. Пролетари суйлав округĕнчи канашлу Сталин, Молотов, Каганович, Ворошилов, Микойан, Йежов, Хрушчов тата Пичугина йулташсене Сойуз Советне депутата суйлама кандидата тăратнă.

Суйлав умĕнхи канашлусем хăйсен округĕсенчи суйлавçăсем патне чĕнсе калани йанă, суйлавçăсене пурне те ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали суйлав кампанине активлă хутшăнма чĕннĕ.

Суйлав умĕнхи канашлусем Сталин тата Молотов йулташсем патне çырусем йанă.

(ТАСС).

Италири фашисла террор

ЛОНДОН. 21-Х. Англири „Манчестер Гардиан“ хаçат, йулашки вăхăтра Италире фашисла террор нумай вăйланни çинчен çырат. Италин фашисла правителстви, Италири ĕçхалăхĕн ирекне пусмăрласа, Испани халăхне вăрçăпа тапăнассине çаплах туса пырат. Çавăнпа рабочисем, служащисем, хресченсем тата вак торговецсем хушшинче фашисла правителствăна курайманлăх кунран кунах ӳссе пырат. Çавăнтан килет те ĕнтĕ фашисла террор вăйланни.

Арĕслениссене фашиссем пит хытă мăшкăл тăваççĕ тата хайар наказанисем параççĕ. Политикăлă ĕçсемшĕн арĕсленĕ çынсем ăшне вăйпах касторовăй çу кĕртеççĕ тата хĕнеççĕ,—çавăн пек асаплантарнисем халĕ иртнĕ вăхăтринчен те нумайрах пулаççĕ.

Политикăлă ĕçсемшĕн арĕслениссене валли нумайах та пулмаст концентрацилĕ лагĕрсем çĕнĕрен уçнă,—вĕсене чи инçетри тата чи тискер районсенче уçнă. Çав лагĕрсенче те ĕнтĕ фашиссем арĕсленĕ çынсем туллийех, вĕсем унта пит йăвăр условисенче пурăнаççĕ.

Флоренци хули, тесе çырат хаçат, пысăк пăлханусен центрĕ пулса тăрат. Безработнăйсем кунта ниçтинчен те нумайрах. Вак хуçалăхлă хресченсем тата рабочисем тӳсме çук йăвăр условисенче пурăнаççĕ. Ку провинцири рабочисемпе хресченсем йулашки уйăхсем хушшинче фашисла режима хирĕç уççăнах тăнă. Полици, Флоренцирен 40 километрта ларакан Емполи йатлă промышлĕннăçлă пĕчĕк хулара, Испанин республикăлă правителствине валли укçа пухакан организацине тупнă. Унта полици 130 çын арĕсленĕ. Пентассьевăра та çавăн пек организацийех тупнă. Ку организаци те Испанире фашисла интервенци тунине хирĕç ĕçленĕ.

(ТАСС).

Италирен татах çар йарасси çинчен калаçни

ПАРИЖ, 21-Х (ТАСС). Парижри чылай хаçатсем çырнă тăрăх, Испанири фашиссен пуçлăхĕн — Франкон пиччĕшĕ халь Римра имĕш. Вал Муссолинипе Италирен 100 пин салтаклă експедицилĕ корпус Испанине йарасси çинчен тата Мадрид фронтĕнче сарлакан наступлени тума Италирен 100 самолот йарасси çинчен калаçат, тесе çыраççĕ хаçатсем.

Йегоров йачĕпе тăракан вагонсем тăвакан завод коллективĕ Сойуз Советне депутата суйлама Лазарь Моисейевич Кагановиче кандидата тăратнă

ЛЕНИНГРАД, 22-Х (ТАСС). Пайан Йегоров йачĕпе тăракан вагонсем тăвакан заводри рабочисен, специалиссен тата служащисен вуçĕ пин çынлă коллективĕ Сойуз Советне депутата суйлама Л. М. Каганович йулташа кандидата тăратнă. Лазарь Моисейевич Каганович йулташ — коммунисла партин шанчăкла ывăлĕ. Вăл, Сталин йулташпа алла алăн тытăнса, парти ĕречĕсен тасалăхĕшĕн ленинла кĕрешсе пынă, халĕ те кĕрешсе пырат. Чукунçул транспăрчĕ, халăх хуçалăхĕн кайа йулнă отрăçĕлĕ пулнăскер, Л. М. Каганович йулташ йертсе пынипе, малта тăракан отрăçĕл пулса тăчĕ.

Пуху Л. М. Каганович йулташран Ленинград хулин Мускав округĕнче Сойуз Совечĕн депутатне баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтса постановлени йышăннă.

Совет Сойузĕ тăрăх

* * **Хаклă тупăш.** Хальхи вăхăтра отпускра канакан Игнатйевпа Горйачкин старателсем Алексейевск приискинчи „Знаменитый“ рудникăн Рассыпной отвал йатлă районĕнче (Краснойарск) 950 грамлă ылтăн самородокĕ тупнă. Рудник управляйушчийĕ Сизов йул. çак района тĕрĕслесе вĕренес ĕçе иртерме палăртни çинчен пĕлтернĕ. Унта ылтăн нумай тупăнасса шанаççĕ.

* * **В. Гризодубовăн пысăк рекорчĕ.** Октаберĕн 15-мĕшĕнче В. Гризодубова лотчик-орденоносец Е. Слобоженко бортмеханикпе „УТ-2“ çăмăл гидросамолет çинче 3.267 метр çуллĕш вĕçсе хăпарнă. Çак вĕçевре В. Гризодубова Америкăри Моури лотчицă тунă пĕтĕм тĕнчери рекордран та чылай иртернĕ.

* * **Çĕнĕ çуртсем.** Социалисăмлă Аслă револуци 20 çул тултарнă тĕле Днепропетровскăри ĕççыннисем нумай пурăнмали çуртсем илеççĕ. Халь Сталин йачĕпе тăракан чукунçул работникĕсем валли 4 етажлă çурт, ăслăлăх работникĕсемпе транспăрт инженерĕсем валли икĕ çурт туса пĕтереççĕ. Петровски йачĕпе тăракан заводри рабочисем валли 147 хватерлĕ çурт туса лартнă. Карл Либкнехт, Ворошилов, Калинин йачĕпе тăракан заводсенчи рабочисем валли те пурăнмали çĕнĕ çуртсем тунă. Нумай çĕнĕ çуртсене пурăнма тытăннă та ĕнтĕ.

* * **Арбă вырăнне автомобил.** Узбекистанри кишлаксенче арбă тахçан аваллантпах çул çуремели улшăнми хатĕр пулса тăнă. Лашасемпе ашаксем 40 пăт ытла турткан арбă çине тийенĕ йапаласене хăйарлă çулсем тăрăх аран-аран сĕтĕрсе çӳренĕ.

Халь анлă шоççесем тăрăх автомобилсем васкавлă çӳреççĕ. Икĕ çул кайарах республикăри колхозсем 134 автомашинă илнĕ. Иртнĕ çул вĕсен хисепĕ пилĕк хут ӳснĕ. Колхозсем çак çул пуçламĕшĕнче кăна 1.209 çĕнĕ автомашинă илнĕ.

Пирĕн партин Тĕп Комитечĕ хĕçпăшаллă восстани çинчен решени йышăнни пайан, октăберĕн 24-мĕшĕнче, 20 çул тултарчĕ.

В. И. Ленин

Тĕпком членĕсем патне йанă çыру

Йулташсем!

Епĕ ку йĕркесене 24-мĕшĕнче каçхине çыратăп, положени калама çук йăвăр. Паллăран та паллă, восстанийе вăраха хăварни халĕ, чăнахах та ĕнтĕ вилĕмпе пĕрех пулать.

Пĕтĕм вăйран ĕнентерсе калатăп йулташсене, халĕ пурте çÿç пĕрчи çинче тытăнса тăрать, черетре çакăн пек ыйтусем тăраççĕ, вĕсене совещанисем мар, сиессем мар (Советсен сиессем пулсан та), халăхсем пĕр хăйсем çеç, масса, хĕçпăшалланнă массăсен кĕрешĕвĕ татса памала.

Корниловецсем буржуала кĕсни, Верковскийе вырăнтан кăларни кĕтме, йураманнине кăтартса параççĕ. Кирек мĕн пулсан та, пайан каçхине, пайан çĕрле йункерсене т. ыт. те хĕçпăшалсăрлантарса (хирĕç тăраççĕ пулсан, çĕнтерсе), правителствăна арĕслемеле.

Кĕтме йурамасть!! Пĕтĕмпех çухатма пулать!!

Влаçа çийĕнчех илнин хакĕ: Верховскийе хăваласа йарса корниловла иккĕмĕш вăрттăн кавар тунă корниловла правителствăран **халăха** (сиеса мар, халăха, чи малтан çарпа хресченсене) хÿтĕлесси пулать.

Влаçа камăн илмеле?

Халĕ ку пурпĕрех: антив ăна Вăрçăлă-Революцилĕ Комитет „йе урăх учреждени", влаçа халăх интересĕсен, çар интересĕсен (çийĕнчех мир сĕнесси), хресчен интересĕсен (çĕре çийĕнчех илесси, уйрăм харпăрлăха пăрахăç тăвасси), выçă ларакансен интересĕсен чăн-чăн представителĕсене паратăп тесе калакансем, илтĕр.

Пур районсем те, пур полксем те, пур вăйсем те çийĕнчех мобилизацилене Вăрçăлă-Революцилĕ Комитета, боЉшевиксен Тĕпкомне халех делегацисем йарса, влаçа тем пулсан та Керенскипе унăн компанийĕ аллинче 25-мĕшчĕн хăвармала мар, нийепле те хăвармала мар; ĕçе пайанах каçхине йе çĕрле татса памала тесе çине тăрса хушчăр.

Вăраха йанăшĕн ревољуционерсене истори каçармĕ, вĕсем çĕнтерме пултараççĕ (пайан чăннипех те çĕнтерĕç), ыран нумай çухатма пултараççĕ, пĕтĕмпех çухатма пултараççĕ.

Пайан влаçа илсе, епĕр ăна Советсене хирĕç тăрасшăн мар, вĕсемшĕн илетпĕр.

Влаçа илесси восстани ĕçĕ пулать; унăн политикăлă тĕллевĕ влаçа илсен паллă пулĕ.

Октăберĕн 25-мĕшĕнче иккĕленсе сасăлассине кĕтни вилĕм йе формаљнăç пулнă пулĕччĕ, халăх çавăн пек ыйтусене сасăласа мар, вăйпа татса пама пултарать те тивĕçлĕ; ревољуцин йăвăр саманчĕсенче халăх хăйĕн представителĕсене, хăйĕн чи лайăх представителĕсенех те, йăма пултарать те тивĕçлĕ, вĕсене кĕтсе тăмала мар.

Çавна мĕн пур ревољуцисен историйĕ кăтартса пачĕ; **ревољуцийе çăласси**, мир сĕнесси, Питĕре çăласси, выçлăхран çăласси, çĕре хресченсене илсе парасси ревољуционерсĕнчен килнине пĕлетăркаçах, саманта вĕçертсе йарсан, вĕсен айăпĕ виçесĕр пысăк пулнă пулĕччĕ.

Правителствă турткаланса тăрать. Ăна **пĕтерсе лартас** пулать, кирек мĕн пулсан та пĕтерсе лартас пулать.

Выступленийе вăраха хăварни вилĕмпе пĕрех.

1917 ç. нойаберĕн 6-мĕшĕнче (октăберĕн 24-мĕшĕнче) çырнă.

И. Сталин

Мĕн кирлĕ пире?

Февраљ уйăхĕнче рабочисемпе салтаксем патшана сирпĕтсе антарчĕç. Анчах, патшана çĕнтерсе, вĕсем влаçа хăйсен аллине илесшĕн пулмарĕç. Йурăхсăр пастырсем, — есерсемпе меншевиксем, йертсе пынă рабочисемпе салтаксем влаçа ирĕклĕнех помещиксен тата капиталиссен ставленникĕсене: миљуковсемпе љвовсене, гучковсемпе коноваловсене пачĕç.

Çакă вăл çĕнтерекенсен пысăк йанăшĕ пулнă. Çав йанăша пула халĕ салтаксем фронтра, рабочисемпе хресченсем тылра асап тÿссе пураççĕ.

'Патшана сирпĕтсе антарса, рабочисем çăкăрпа ĕç тупма шухăшланă. Анчах ун вырăнне вĕсем пурнăç хакланнипе выçлăх, локаутсемпе безработицă „туйанчĕç". Мĕншĕн?

— Мĕншĕн тесен правителствăра капиталиссен тата спекуљантсен ставленникĕсем лараççĕ, вĕсем рабочисене вăйран йарса çаварса илесшĕн.

Патшана сирпĕтсе антарса, хресченсем çĕр илме шухăшланă. Анчах ун вырăнне вĕсем хăйсен депутачĕсене арĕслениие тата карателлĕ експедицисем „туйанчĕç". Мĕншĕн?

— Мĕншĕн тесен правителствăра помещиксен ставленникĕсем лараççĕ, вĕсем тем тусан та хресченсене парăнас çук.

Патшана сирпĕтсе антарса, салтаксем мир илме шухăшланă. Анчах ун вырăнне вĕсем вăрăма тăсăлнă, çитменне тата çитес кĕркуннеччен тăсма шутлакан вăрçă „туйанчĕç". Мĕншĕн?

— Мĕншĕн тесен правителствăра Англипе Франци банкирĕсен ставленникĕсем лараççĕ, вĕсене вăрçă „час пĕтни" пайталă мар, вĕсем вăрçă шучĕпе вăр-хурахла пуйса пыраççĕ.

Патшана сирпĕтсе антарса, халăх тепĕр иквиçĕ уйăхран Учредителлĕ Собрани пухĕç тесе шухăшланă. Çав хушăра Учредителлĕ Собрани пухассине пĕрре ĕнтĕ кайараха хăварнă пулнă, халĕ ĕнтĕ тăшмансем ăна пухассине пуçпех пĕтерсе лартма куçкĕрет хатĕрленеççĕ. Мĕншĕн?

— Мĕншĕн тесен правителствăра халăх тăшманĕсем лараççĕ, вĕсене Учредителлĕ Собранийе вăхăтра пухни усăллă мар.

Револуци çĕнтерне хыççăн влаç помещиксемпе капиталиссен, банкирсемпе спекуљантсен, скупщиксемпе мародйорсен аллинче йулнă,—акă мĕнре пулать рабочисемпе салтаксен пысăк йанăшĕ, акă ăçта вăл тылпа фронтри хаљхи инкексен сăлтавĕ.

Ку йанăша халех тÿрлетмеле. Çавăн пек самант çитсе тăчĕ: тата та вăраха йани ревољуцин пĕтĕм ĕçне пĕтерсе хурас хăрушлăх кÿрет. Помещиксемпе капиталиссен хаљхи правителстви вырăнне рабочисемпе хресченсен çĕнĕ правителстви туса лартмала...

Халăх суйламан, халăх умĕнче ответ тытман хăйне хăй правителствă текен хаљхи правителствă вырăнне халăх йышăннă, рабочисен, салтаксен тата хресченсен представителĕсем суйланă тата çав представителсем умĕнче ответ тытакан правителствă туса лартмала.

Кишкин-Коновалов правителстви вырăнне Рабочисен, Салтаксен тата Хресченсен Депутачĕсен Совечĕсен правителстви туса лартмала.

Февраљте туманнине халĕ тумала.

Çапла майпа, çапла майпа кăна ĕнтĕ мир, çăкăр, çĕр, ирĕклĕх кĕрешсе илме пулать.

— Рабочисем, салтаксем, хресченсем, казаксем, мĕн пур ĕççыннисем!

Помещиксемпе капиталиссен хаљхи правителстви вырăнне влаçра рабочисемпе хресченсен çĕнĕ правителстви пултăр тетĕр-и есĕр?

Российăн çĕнĕ правителстви хресченсем ыйтнă тăрăх помещиксен çĕре тытса тăрас правине пăрахăçа кăлартăр та помещиксен пĕтĕм çĕрĕсене хресчен комитечĕсене тÿлевсĕр илсе патăр тетĕр-и есĕр?

Российăн çĕнĕ правителстви патшан вăрттăн договăрĕсене халăх пĕлмеле тутăр, çав договăрсем обйазателлă мар тесе йышăнтăр тата вăрçă вăрçакан халăхсене тĕрĕс мир сĕнтĕр тетĕр-и есĕр?

Российăн çĕнĕ правителстви локаутчиксене тата спекуљантсене, выçлăхпа безработицăна, ишĕлÿпе пурнăç хакланнине йурийех çивĕчлетекенскерсене, йăлтах çаварлăхласа ларттăр тетĕр-и есĕр?

Есĕр çавна тăвас тетĕр пулсан, пĕтĕм вăйсене, хăвăрăн пĕтĕм вăйсене пухăр, пурте пĕр çын пек siксе тăрăр, пухусем тăвăр, делегацисем суйлăр та ыран Смољнăйра уçăлакан Советсен Сиесне çав делегацисем урлă хăвăрăн требованисене каласа парăр.

Есĕр пурте харăссăн та çирĕппĕн тăрсан, халăх ирĕкне хирĕç тăма никам та хăйас çук. Есĕр мĕн чухлĕ вăйлăрах, организацилĕнрех тата хăватлăрах тăрса тухăр, кивĕ правителствă çĕннине çавăн чухлĕ мирлĕнрех хăйĕн вырăнне парĕ. Пĕтĕм çĕршыв вара халăхсем ваљљи мир, хресченсем ваљљи çĕр, выçă ларакансем ваљљи çăкăрпа ĕç кĕрешсе илесси патне хăйулăн та çирĕппĕн кайĕ.

Влаç Рабочисен Салтаксен тата Хресченсен Депутачĕсен Совечĕсен аллине куçмала.

Влаçра Советсем суйланă, Советсем улăштарма пултаракан, Советсен умĕнче ответ тытакан çĕнĕ правителствă пулмала.

Çавăн пек правителствă кăна Учредителлĕ Собранийе вăхăтра пухма пултарать.

Сталин йулташăн ку статйине 1917 çулти нойаберĕн 6-мĕшĕнче (октăберĕн 24-мĕшĕнче) „Рабочий путь" йатлă боЉшевикла хаçатра 44 № пичетлесе кăларнă пулнă.

Статйан текстне Сталинăн „На путях к Октябрю" йатлă кĕнекинчен илнĕ. И. Сталин. „На путях к Октябрю". Статйасемпе сăмахсем, 1917 ç. март-октăбĕр. Иккĕмĕш издани, ГИЗ, 1925 ç.

Путиловецсем Октăбĕршĕн кĕрешни

(Ĕлĕк Путилов заводĕнче слесăр пулса ĕçленĕ Ф. А. Лемешев йулташ аса илнисем)

Нарвă районĕнчи рабочисем хĕçпăшаллă восстанине Октăбĕр кунĕсем çитиччен чылай малтан хатĕрленме пуçланă. 1917 çулхи майăн 12-мĕшĕнче Путилов заводĕнче Владимир Илйич сăмах тухса калани çак ĕçре калама çук пысăк вырăн йышăнчĕ.

Ревољуци çулпуçне путиловецсем çав тери пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Митинг пĕтнĕ хыççăн рабочисем Илйича автомобил патне алăпа çĕклесе кайрĕç те Нарвă хапхисем патне çитиччен ăшшăн ăсатса йачĕç.

Ленин пырса кайнă хыççăн Путилов завочĕ боЉшевикла завод пулса тăчĕ, тата, боЉшевиксемсĕр пуçне, кунта урăх никама та итлемерĕç.

Рабочи массисен ревољуцилĕ шухăшĕ кашни кун ÿссе пычĕ.

Путилов завочĕ вырнаçнă Нарвă районĕ боЉшевиксен тĕп килĕ пулнă. Кунта йункерсем килсе курăнма та хăйайман. Ийуљ кунĕсем хыççăн Пĕтĕм Российăн унчухнехи меншевикла-есерла Тĕпĕçтăвкомĕ пире хĕçпăшалсăр тăратса хăвармa хăтланнине вĕсем лайăх пĕлнĕ. Тĕпĕçтăвком пирĕн пата икĕ депутат-есера йанă, вĕсем хĕçпăшалсене кайала пама сĕнсен, епĕр есерла парламентарисене хăваласа йатăмăр. Анчах хĕçпăшала, кайран кирлĕ пулĕ тесе, шаларах пытарса хутăмăр.

Август—сентăбĕр уйăхĕсенче путиловецсем вăрçă ĕçне уççăнах вĕренме пуçларĕç. Катерингоф садĕнче заљатисем кунсерен иккĕ виçĕ сехет хушши пулса иртеччĕç.

Корниловщинăпа кĕрешнĕ тапхăрта заводра икĕ пин çын ытла Хĕрлĕ гварди ретне çырăннĕç. Завода йулнă рабочисем калама çук пысăк производствăлă çĕкленÿпе ĕçленĕ, вĕсем ревољуцилĕ вăйсем ваљљи хĕçпăшал хатĕрленĕ. Çакна каласан та çитĕ: икĕ кун хушшинче икĕ çĕре йахăн тупăсем, темиçе бронемашинă тата ыттисем те пухса хатĕрленĕ. Çак ĕçе ĕлĕк пĕр уйăх хушшинче тунă.

Парти Тĕп Комитечĕ хĕçпăшаллă восстани çинчен йышăннă решенишĕн путиловецсем хĕрÿлĕн тăнă.

Çапла вара рабочи класа сутакансене—ревољуци штрейкбрехĕрĕсене — хĕçпăшаллă восстанине хирĕç тухса калакан ылханлă каменевсене, зиновйевсене тата троцкисене тепĕр хут сивлесе тăкнă.

Ленин восстанине тĕплĕн хатĕрленме кирлĕ, массăсен ревољуцилĕ шухăшĕпе усă курма кирлĕ, тесе вĕрентнĕ.

БоЉшевиксен партин Сталин йулташ йертсе пыракан Тĕпкомĕ, Ленин çапла кăтартса панисем тăрăх ĕçлесе пырса, восстани тума практикăра вăйлăн хатĕрленнĕ, Хĕрлĕ гварди организацилес тата вăрçă искусствине вĕрентес ĕç çине уйрăмах хытă çаварăнса пăхнă.

Буржуази влаçне сирпĕтсе антарма хатĕрленни çинчен хыпар илтсен путиловецсем мĕнле хавхаланса кайнине хут çине çырса пама та май çук. Октăберĕн 20-мĕш числисем тĕлне Путилов заводĕнчи отрйад çапăçува йăлтах хатĕрленсе çитнĕ. Ревољуцилĕ Çар Комитечĕн приказĕ тăрăх, путиловецсем ытти заводсенчи красногвардейцăсемпе пĕрле Смољнăй çуртне тата районти советсен çурчĕсене хурал тăнă.

Анчах буржуази влаçран çапăçусăрах тухса кайасшăн пулман. Петроград Çар округĕн штабĕ ревољуцине çĕмĕрсе тăкма урса кайсах хатĕрленнĕ. Вăхăтлăх правителствă наступлениие куçма шутланă.

Çакна ответлесе, Ревољуцилĕ Çар Комитечĕ октăберĕн 24-мĕшĕнче мĕн пур полксемпе Хĕрлĕ гварди отрйачĕсем патне чаççене çапăçува хатĕрлесе çитерме хушса распорйажени йачĕ.

Çав кунах Путилов заводĕнчи рабочисем пĕтĕм заводра пулнă митингра боЉшевикла ревољуцилĕ штаба пулăшма обйазателствă пачĕç тата йункерсене часрах хĕçпăшалсăрлатасси çинчен сĕнÿ пачĕç.

Октăберĕн 25-мĕшĕнче красногвардейцăсем, малтанах туса хатĕрленĕ план тăрăх, правителствăн чи кирлĕ учрежденийĕсене: Маринский двореца, телефон станцине, телеграф, почтамт, государствă банкне, кĕперсене, чукунçул вокзалĕсене йышăнчĕç. Зимний дворец патĕнче чылай вăйлăн çапăçмала пулнă, анчах каç пулнă çĕре буржуазипе помещиксен правителствин çак йулашки тĕрекне те паттăрăн штурмласа туртса илнĕ. Çапăçу операцисене Путилов заводĕнчи красногвардейцăсен отрйачĕ те тÿрех хутшăннă.

Буржуази аллинчен туртса илнĕ влаçа çав кунах Пĕтĕм Российăри Советсен II-мĕш Сиесне панă, вăл Сиес пролетари диктатурин пĕрремĕш правителствине уйăрса, правителствă пуçлăхне В. И. Ленина лартнă.

Ф. А. Лемешев.

Иртнĕ пурнăçри паттăр кĕрешÿсен докуменчĕсем

„Бромлей тăванĕсен заводĕнчи рабочисен пĕрлехи пухувĕ, çĕршывра килсе тухнă лару-тăру çинчен сÿтсе-йавса, çакăн пек решени йышăнчĕ: рабочисенчен халех çапăçу дружини тăвас тата рабочисемпе салтаксен депутачĕсен советĕнчен çав дружинă ваљљи хĕçпăшал ытларах тупас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнма ыйтас. Хĕçпăшала тÿрех заводри комитета памала.

Мускав, 1917 çулхи августăн 29-мĕш".

(Мускав облăçĕнчи архив. №-42, 205 мĕш лист).

* * *

„Епĕр, Варшавск-арматурă заводĕнчи 750 рабочи пурте пĕр сасăпа, рабочисен депутачĕсен советĕнчен рабочисенчен организациленĕ çапăçу дружинине пĕтĕмпех хĕçпăшаллантарма ыйтма йышăнтăмăр.

Буржуази уççăнах контрревољуцилĕ, урăхла каласан, халăха вĕлерсе пĕтерекен вăрçă пуçарса йанине кура, епĕр, базăсенчи рабочисем, пурте пĕр çын пек, хамăр йунпа кĕрешсе илнĕ ирĕклĕхе хÿтлесе тăма йышăнтăмăр.

Мускав, 1917 ç. августăн 31-мĕш"

(Мускав облăçĕнчи архив. №-42, 203-мĕш лист).

* * *

„Епĕр, Алексейевпа Вишњаков тата Шамшин йулташлăхĕнчи рабочисем, пĕрлехи пухува пуçтарăнса хаљхи вăхăтра çĕршыв умне килсе тухнă лару-тăру çинчен сÿтсе-йавса, пурте пĕр сасăпа çакăн пек резољуци йышăнтăмăр: „Ревољуцилĕ рабочисене халех хĕçпăшаллантарма ыйтатпăр".

Мускав, 1917 çулхи сентăберĕн 6-мĕш".

(Мускав облăçĕнчи архив. №-42, 196-мĕш лист).

Октăбĕрти восстани

Питĕрти рабочисемпе салтаксем пирĕн парти йертсе пынипе, Корнилов пăлхавне путарса лартни — пĕтĕм çĕршывра ревољуци хумне çĕнĕрен çĕклентерсе йачĕ.

Генералсем, помещиксем тата капиталиссем ревољуцине çĕмĕрсе тăкса çĕршывра хăйсен влаçне çирĕплетсе лартас ĕмĕтпе хуласемпе йалсене ĕççыннисен йунĕ айне тума хатĕр пулнине массăсем хăйсен опычĕ çинче курчĕç. Массăсем курчĕç, меншевиксемпе есерсем буржуази пуçпулса тăрассине сыхласа хăварас тесе кирек-йепле сутăнчăклă ĕç тума та хатĕр, çĕршывра пĕр парти çеç, боЉшевиксен партийĕ çеç контрревољуцине отпор пама пултарать.

Петроградра, Мускавра, Уралта, Украинăра, Донбасра металлиссемпе горњаксем, текстилщиксем, печатниксем, кожевниксем, чукунçул çинче ĕçлекен рабочисем буржуазипе кĕрешме активлăн çĕкленнĕ. Стачкă йухăмĕ пĕтĕм çĕршыв тăрăх вăйлăн сарăлса кайнă.

Вăхăтлăх правителствă аллинчен çĕр илме шухăшланă мĕн пур иљљузисене корниловщинă хресченсен пуçĕнчен татăклăнах кăларса пăрахрĕ. Йал умне тепĕр хут помещиксем пуçпулса тăрас хăрушлăх тухса тăнă. Помещиксен çĕрĕсене, тыррине, выљăх-чĕрлĕхне, ĕçхатĕрĕсене халех туртса илесси шĕн пуçланса кайнă хресченсен йухăмĕ калама çук пысăк талкăшпа сарăлнă.

Вăхăтлăх правителствă пысăкăн усă куракан карателнăй експедицисем пăлханусене путарса лартайман çеç мар, тата, йăлтах урăхла, вĕсене малала сарăлса пыма май панă.

Пусмăрта пурăнакан национаљнăçсем хушшинче хумханусем хыпса тухса уйрăмах хытă вăйланса кайнă, вăл хумханусенчен чылай облăçсенче хĕçпăшаллă кĕрешÿ пуçланнă.

Фронтра тата флотра лару-тăру тата ытларах çивĕчленсе кайнă. Командирăй состав салтаксемпе матроссем хушшинче йулашки шанчăкне çухатнă. Уйрăм чаçсем час-часах çар приказĕсене пăхăнми пулнă, салтаксем фронта пăрахса киле тавăрăна пуçланă. Фронт саланса кайнă.

Çĕршывра ревољуцилĕ кризис ÿссе пынă.

БоЉшевикла партин авторитечĕ рабочи класпа хресченсем хушшинче хăвăрттăн ÿссе тĕрекленнĕ, Парти лозунгĕсем тĕрĕссине массăсем хăйсен опычĕ çинче ĕненмеле пултăр тесе боЉшевиксем тытса пынă тактикă пĕтĕмпех тÿрре тухнă. БоЉшевикла партин влийанийĕ советсенче те ÿссе пынă. Петроградри, Мускаври тата ытти çĕрти чылай советсенче боЉшевиксем ытларах вăй илеççĕ.

Çавăн пек условисенче парти кун йĕркине влаçа туртса илес ыйту лартнă. Парти „пĕтĕм влаçа советсене" текен лозунга çĕнĕрен кăларса тăратнă. „Хаљ çак лозунг ревољуци восстани урлă тÿрех пролетариат диктатури патне пырассине пĕлтернĕ. Ытларах та, хаљ çак лозунг пролетариат диктатурине организацилесе, ăна государствă форми парассине пĕлтернĕ". (Сталин, Вопросы ленинизма, изд. 10-ое стр. 94).

Сентăбĕр вĕçнеле тата октăберте Ленин чылай статйасенче („Кризис назрел", „Письмо к товарищам большевикам, участвующим на областном с'езде советов Северной области", т. ыт.); восстани тума тăхтани вилĕмпе пĕрех пулнине палăртса, восстани организацилес ыйтува çине тăрса çивĕччĕн лартать.

Ленин çырнă: „Кризис пулса çитнĕ. Вырăс ревољуцин пĕтĕм малашлăхне картă çине лартнă. БоЉшевиксен партин пĕтĕм чыслăхĕ ыйту умĕнче тăрать. Пĕтĕм тĕнчери рабочисен социализмлă ревољуцин пĕтĕм малашлăхне карттă çине лартнă." (Ленин, т. XXI стр. 239).

Ленинпа Сталин сĕннипе, восстани ыйтуне 1917 çулхи октăберĕн 10 (23-мĕшĕнче) боЉшевиксен Тĕпкомĕн ларувĕнче пăхса тухнă. Тĕп Комитет „хĕçпăшаллă восстани пурпĕрех пулмала, вăл пĕтĕмпех пулса çитнĕ" тесе йышăннă (Ленин, т. XXI, стр. 330).

Тĕп Комитетăн хĕçпăшаллă восстани çинчен йышăннă решенине пĕтĕм парти организацисем ырласа вăл решенишĕн тăнă.

Ылханлă штрейкбрехерсем, Каменевпа Зиновйев, восстанине хирĕç тăнă. Çав ирсĕр предателсем, йулашкинчен фашисăм лагĕрне персе анаскерсем, Тĕпком ларувĕнче хирĕç тухса каланипе çеç çарăнман, вырăнти комитетсем патне Тĕпком решенине хирĕçлесе протест йанă.

Çав ирсĕр изменниксем восстанине хирĕç тăни Ленина хайаррăн тарăхтарса йанă. Çуламлă пролетарилĕ ревољуционерăн мĕн пур хĕрÿлĕхĕпе Ленин вĕсене уççăнах контрревољуци лагĕрне куçнă ирсĕр предателсем, тесе питленĕ.

Ленин ыйтува боЉшевикла тÿррĕн лартнă: „Йе Либердансем патне куçса „пĕтĕм влаçа Советсене" текен лозунга уççăнах пăрахăçа кăлармала, йе восстани. Варри çук" (Ленин, т. XXI, стр. 338).

Октăберĕн 16-мĕшĕнче Тĕпком Петроградри йертсе пыракан парти организацисен представителĕсемпе пĕрле лару иртернĕ, Çав пуху Тĕпком решенийе пĕтĕмпех ырлакан резољуци йышăннă.

Икĕ ревољуцине те Ленин çырса сĕннĕ. Çав кунах Тĕпком ларувĕнче хĕçпăшаллă восстанине тÿрех йертсе пыма тата организацилеме çарпа политикăлă центрĕ тунă, вăл центра йертсе пыма Сталин йулташа лартнă.

Октăбĕр пуçламĕшĕнче Ленин Финљандирен таврăнать те хĕçпăшаллă восстанине хăй йертсе пыма тытăнать.

Зиновйевпа Каменев предателсем, вырăнсенчи парти организацисенче вăйлă отпор туйаннă хыççăн, хăйсен доносне меншевиксен „Новая жизнь" хаçатĕнче пичетлетерсе кăларса, хĕçпăшаллă восстани тăвасси çинчен парти йышăннă секретлă решенине контрревољуцилĕ буржуази правителствине уçса панă. Çав Иудăсем, пролетарилĕ ревољуцин çĕнтерÿлĕ аталанăвне пĕтерсе лартас, капиталиссемпе помещиксен пуçпулса тăрассине çăлипех хăварас ĕмĕтпе темĕнле сутăнчăклă ĕç тума та хатĕр пулнă, нимĕнле майсенчен те йĕрĕнсе тăман.

Ленин Тĕп Комитета çыру йанă, унта вăл çапла çырнă:

„Каменевпа Зиновйев хăйсен партийĕн Тĕпкомĕ хĕçпăшаллă восстани çинчен тата хĕçпăшаллă восстани тума хатĕрленессине, хĕçпăшаллă восстани тума вăхăт суйласа илессине тăшмансенчен пытарса усрасси çинчен йышăннă решенийе Родçанкопа Керенскине каласа пĕлтерчĕç. Ку факт. Çав факта нимĕнле пăркаланнипе те сирсе пăрахма çук. Тĕпкомăн икĕ членĕ капиталиссем умĕнче киревсĕр ултавсемпе вĕсене рабочисен решенине каласа пĕлтерчĕç, Çавна хирĕç пĕр ответ пулма пултарать, пулмала та: халех Тĕпком решенийĕ пулмала:

„Зиновйевпа Каменев партилĕ мар пичетре çырса кăларнине пĕтĕмпех штрейкбрехерла ĕç тесе шутласа Тĕп Комитет иккĕшне те партирен кăларать".

Ленинпа Сталин пăхса ÿстернĕ боЉшевикла парти ылханлă отщепенцăсене—штрейкбрехерсене арkatса тăкрĕ. Парти хăйĕн учителĕсем, Ленинпа Сталин хыççăн кайрĕ.

Ленин восстаниччен чылай малтан, боЉшевиксем государствă влаçне тытса тăма пултарĕç-ши, текен ыйтува, Керенски йыттисенчен пытанса пурăнма тивнĕ чухне çырнă çав йатлă брошÿрăра тĕплĕн пăхса тухса, боЉшевиксем государствă влаçне тытса тăма пултараççĕ, тесе ответленĕ, „Советы постороннего" йатлă статйара Ленин çакна аса илтернĕ: „...хĕçпăшаллă восстани политикăлă кĕрешÿн уйрăм саккунсене пăхăнса тăракан уйрăм тĕсĕ пулать, çав саккунсем пирки тĕплĕн шухăшласа пăхмала. Карл Маркс хĕçпăшаллă „восстани вăл, вăрçă пекех, искусствă" тесе çырса, çак истинăна питĕ уççăн каласа панă". (Ленин, т. XXI, стр. 319).

„ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине ĕççыннисен нумай мĕлйунлă массисене боlъшевикла ăнлантарса парар

Мĕншĕн суйлавçăсем спискăна кĕмесĕр йулаççĕ

Чăвашпромсойуз системинче кустарсен ертелĕсем нумай. Кустарсенчен нумайăшĕ ертелсенче ĕçлеççĕ, анчах килте пĕчченшерĕн ĕçлекен кустарсем те пур. Çавăнпа та Чăвашпромсойуз çумĕнчи парторганизацин задачи — Сталинла Конституцийе, çĕнĕ суйлав саккунне пропагандăлас, агитацилес ĕçпе кашни кустара çавăрса илесси пулаť.

Чăвашпромсойуз çумĕнчи парторганизацире пурĕ 19 коммунис. Çакăн чухлĕ вăйа пропагандăпа агитаци ĕçне активлăн хутшăнтарсан, паллах, кустарсем хушшинче ăнлантару, вĕренту ĕçĕ лайăхах пулса пымала. 19 коммунисран 6-шĕ кăна агитатăрсем, беседчиксем, чтецсем пулса ĕçлеççĕ, ыттисене партком ку ĕçе мобилизацилемен. Çĕнĕ суйлав саккунне вĕренме пилĕк кружок организациленĕ. Вĕсенчен: пĕрре—партийцăсен кружокĕ, пĕрре—комсомолецсем валlъи, пĕрре—„Спартак" командинчи физкуlътурниксем валlъи, пĕрре партире тăманнисемпе профсойуз членĕсем валlъи, тепри—промсойуз системинчи суту-илӳ сектăрĕнче ĕçлекенсем валlъи.

Дверинин коммунис промкассăри служăщчисем хушшинче агитатăр пулса ĕçлет, Гречкаlъов — промсойузри партире тăманнисем, профсойуз членĕсем тата служăщчисен çемйисем хушшинче ĕçлет, Ребров коммунис—Ленин йачĕпе тăракан çĕвĕ ертелĕнче, Йегоров—„Кожупряжь" ертелре кустарсем хушшинче, Токмаков—суту-илӳ сектăрĕнчи работниксем хушшинче ĕçлет.

Партком секретарĕн заместителĕ Прокопйева йулташ ĕнентернĕ тăрăх, Чăвашпромсойуз аппаратĕнчи служăщчисене, унта ĕçлекен уборщицăсене, промсойуз системин ертелĕсенчи кустарсене пурне те çĕнĕ суйлав саккунне вĕрентес ĕçпе çавăрса илнĕ. Анчах капла каланине ĕненме хĕн. Çĕнĕ суйлав саккунне пропагандăлас, агитацилес ĕçе лайăх йĕркеленĕ пулсан, пĕр кустар та суйлавçăсен спискине кĕмесĕр йулмала мар. Анчах „Красный кустарь" ертелре ĕçлекен Сыкина комсомолкă суйлавçăсен спискине кĕмесĕр тăрса йулнă. Çак факт Чăвашпромсойуз çумĕнчи парторганизаци çĕнĕ суйлав саккунне вĕрентес ĕçпе промсойуз системинчи пур кустара та çавăрса илменнине кăтартса параť.

Кунти коммунистсенчен Шишкин Мартын коммунис примерлă ĕçлет. Вăл хăйĕн 70 çулхи амăшне, сырăва пĕлменскерне, сырăва вĕрентнĕ, суйлав Положенийĕ çинчен тăтăшах ăнлантарса панă. Шишкин Мартын амăшĕ хаlъ сырма та, вулама та пĕлет. Чăвашпромсойузри коммунистсем пурте Шишкин пек ĕçлесен, кустарсем, Сыкина комсомолкă пек, суйлавçăсен спискине кĕмесĕр йулас çук.

Ертелсенче çĕнĕ суйлав саккунне вĕренмели кружоксем организациленĕ. „Красный кустарь" ертелĕнче 2 кружок, Ленин йачĕпе тăракан ертелре — 4 кружок, чăваш тĕррисене тĕрлекен базăра 1 кружок организациленĕ. Партком агитатăрсен ĕçĕсене сайра-хутра çеç тĕрĕслет. Пĕр Гречкаlъовпа Дверинин отчочĕсене çеç итленĕ. Ыттисем вара те лайăх ĕçлеççĕ, те начар, калама хĕнрех. Кусемсĕр пуçне партком секретарĕпе унăн заместителĕ Шупашкарти ертелсене те пырса курмаççĕ. Сăмахран, „Красный кустарь" ертелри Бучиlъникова куlътработница каласа панă тăрăх, октаберь уйăхĕнче вĕсем патне парткомран пырса та курман. Ку вăл парторганизаци массăсенчен, кустарсенчен уйăрăлса кайнине кăтартса параť.

Чăваш Обкомĕн йулашки пленумĕ ССР Сойузĕн Аслă Советне суйласси çинчен йышăннă решенире парторганизацисен пысăк çитменлĕхĕ „çĕрлехи сменăсенчи рабочисемпе работницăсен, общежитисемпе çуртсенче пурнакан рабочисемпе служăщчи арăмĕсен хушшинче, старниксен, пенсионерсен, алăстаççен хушшинче учреждениссемпе суту-илӳ организацийĕсенчи техникăлă служăщчисемпе кил таврашĕнчи рабочисен хушшинче, вăрман сыхлавĕнчи, чукунçул çинчи çавăн пекех тата шыв транспăртĕнчи рабочисен хушшинче суйлав саккунне ăнлантарса парасси начар пулса пыраť" тесе пур организацисене те çирĕппĕнех астутарчĕ. Обком пленумĕн çав çирĕп решенийĕ Чăвашпромсойуз çумĕнчи парторганизацийе те тивет. Депутатсене сасăланă çĕре кустарсемпе вĕсен çемйисене 100 процентпех хутшăнтармала тăвасси парторганизацин пысăк задачи пулаť.

И. Семенов.

Колхозлă йалсем валlъи 119 агитатăр

ВĂРНАР (хамăр корр.). Районра чылай колхозсенче Сталинла Конституцийе тата „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине" вĕренме тивĕçлипе тытăнчĕç. Айкăш, Кăкшăм йалсовечĕсенчи колхозсенче кружоксем йĕркелĕ ĕçлесе пыраççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем заlъатисене пысăк хаваслăхпа çӳреççĕ.

Парти райкомĕпе комсомол райкомĕ суйлав саккунне вĕрентессине малти вырăна хурса, йалсене валlъи агитатăрсем хатĕрлеççĕ. Районра 59 суйлав участки пулаť. Çакна шута илсе кашни участкă валlъийех Çĕмĕрле хулинче пулса иртекен 10 кунлăх курса пĕрер çын йанă. Унсăр пуçне районра агитатăрсен курсĕ пулса иртет. Курса 60 агитатăр килмеле. Вĕсенче 75—80 процент коммунистсемпе комсомолецсем пулаççĕ. Ыттисем партире тăман колхозник-активиссем.

Çĕмĕрлери 10 кунлăх курса кайакан агитатăрсен вĕренес хаваслăхĕ пысăк. Вĕсем кашнийех 10 кун хушшинче суйлав саккунне тĕплĕн ăнланса килсе, харпăрхăй участкинче лайăх ĕçлеме пулаççĕ.

Йев. Воробйов

Кружокра 75 çын

Мартынкассинчи (Трак р.) „Хĕрлĕ хĕвелтухăç" колхозра „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине" вĕренмели кружок ĕçлет. Кружокра 75 çын. Вĕсем заlъатисене пĕр сиктермесĕр çӳреççĕ. Кружокра комсомолецсем пикенсе вĕренни палăраť, вĕсем ыттисене пример кăтартаççĕ.

Борисов.

Абрамовăн пурнăç çулĕ

Константин Абрамов Елĕк районĕнчи „Хорн çул" колхоз членĕ, 58 çулти старик.

Ун çине тинкеререх пăхсан, вăл тискер патша самани вăхăтĕнче чылай хĕн-хур курса ӳснине туйса илме пулаť.

— Ĕлĕкхи иртнĕ пурнăççене аса илсен, чун çӳçенет, куç хуралса килет,—тет вăл.

Константин Абрамов ашшĕ ытла та чухăн пурнăçпа пурăннă. Унăн çемйинче пĕтĕмпе 5 çын пулнă. Вĕсем хура пӳртре кăвак тĕтĕм ăшĕнче пачăхса пурăннă. Выlъăх-чĕрлĕх сахал пулнă. Çиме тырă çитмен...

— Çитмен пурнăçпа пурăннă. Çĕртех пысăк инкек сиксе тухнă. Епĕ çав тери пĕчĕк чухне анне вилсе кайаť. Унтан, епĕ 14 çула çитсен, атте те пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйăрăлаť. Çапла епĕр виçĕ ача тăлăха тăрса йулатпăр.

Абрамовăн пиччĕшĕ вăл вăхăтра 18 çулта пулнă. Вăл ашшĕ вилсен, тепĕр çулне, авланаť. Анчах авланнă хыççăн 3 çултанах вилсе кайаť.

Константин Абрамов ĕç шыраса Чулхулана кайаť. Унта вăл Атăл хĕррине ĕçлеме вырнаçаť. Атăл хĕрринче пароход çинче кочегар пулса ĕçлет, баржă çинче те пулаť. Кунта пĕтĕмпе 6 çул пурăнаť.

— Ĕçлеме çав тери йăвăрччĕ. Пĕр канмасăр кунĕн-çĕрĕн ĕçлеттĕмĕрччĕ. Çапах укçа сахал параччĕç, уйăхне 12 тенкĕ çеç пулаччĕ. Ку укçа пĕр çынна тăранса пурăнма аран-аран çиткелетчĕ.

Атал çинче 6 çул ĕçленĕ хыççăн, вăл киле таврăнаť. Килтен ăна 1916 çулта варçа илсе кайаççĕ. Вăрçăри йăвăр вăхăтсене тӳссе иртерсен, 1918 çулта каллех киле таврăнаť.

Çапла иртнĕ Константин Абрамовăн пурнăçĕ ĕлĕкхи вăхăтра.

* * *

1928 çул. Çак çул йалта колхоз организациленет. Колхоза Константин Абрамов чи малтан кĕрет. Унта пĕтĕм чĕререн тăрăшса ĕçлеме тытăнаť.

— Колхоза кĕрсе ĕçлеме тытăнсан ман пурнăç йусаннă çемĕн йусанса пыма тытăнчĕ. Халĕ епĕ çителĕклĕ пурнăçпа пурăнатăп. Манăн пурте çитет.

Вăл иртнĕ çулта колхозра тăрăшса ĕçленипе çĕнĕ пӳрт лартнă. Пӳрт пысăк тата илемлĕ. Пӳртĕн пĕтĕмпе 4 чӳрече. Пӳрт ăшчикийĕ ĕлĕкхинчен пачах урăх: стена çинче сехет шаккаť, сĕтел çинче хаçатсем, кĕнекесем.

Выlъăх-чĕрлехсем те пур. Унăн ĕне пĕрре, сурăхсем 6 пуç, сысна пĕр пуç тата чăх-чĕпсем чылай. Çиме тырă ытлашшипех çитет. Çипуç лайăх.

Колхозра пĕтĕм чĕререн тăрăшса ĕçлет. Ĕçе лайăх тата пахалăхлă тума тăрăшаť. Кăçал вăл хăй пĕччен 200 ĕçкунĕ ытла тунă. Çемйипе пĕтĕмпе 500 ĕçкунĕ пулаť. Çак ĕçкунĕсемшĕн вăл кăçал 250 пăта йахăн пĕрчĕлĕ тырă илет.

Абрамовăн ывăлĕ Илйа халĕ тракторист, Павăлĕ Елĕк—ПСК(б) Парти райкомĕн иккĕмĕш секретарĕ, Иванĕ Улатăр хулинче вĕренет. Халĕ çемйере 6 çын пурăнаççĕ. Ачисем иккĕшĕ тулли мар вăтам шкулсенче вĕренеççĕ.

Константин Абрамов халĕ çителĕклĕ пурнăçпа савăнса пурăнаť. Çак вăл Аслă пролетарилĕ революцин тивлечĕ. Çак телейлĕ ырă пурнăçа Ленин—Сталин партийĕ туса пачĕ.

Ф. Филиппов.

Вĕсемшĕн хĕл пулмасť пулмала

Йункă йалсоветне кĕрекен „Майăн 1-мĕш" колхоз (Тутаркас р-нĕ) председателĕ Аргандейев выlъăхсене валlъи ăшă витесем хатĕрлесси çинчен маннă пулас. 1935 çулта тума пуçланă витене халъ те тăрласа витсе лартман. Колхоз выlъăхчĕрлĕх апатне те çителĕклĕ хатĕрлемен. Силос хывас плана 40 процент кăна пурнăçланă. Выlъăх кăшманĕ лартма уйăрнă вырăн çинче урăх куlътурă акса ӳстерчĕç.

П. Крылов.

Тухăçлă клевер

Стахановла йухăм пуçланнăранпа чылай колхозниксем чапа тухрĕç. Вĕсем стахановла ĕçлесе халиччен пулман тырпул туса илеççĕ, çĕнĕ агротехникăна алла çавăрса илсе, çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ туса пыраççĕ. Акă, клевер вăрлăхĕ тăвас ĕçе илер. Ĕлĕкрех пулсан вăл ĕç çинчен пирĕн колхозниксем пĕлмен те. Чи йăвăрри — вăл çапса тĕшлес ĕç пулнă. Клевер вăрри тăвас ĕç çак йулăшки 2—3 çул хушшинче çеç сарăлса кайрĕ. Малтанхи çулсенче гектартан 1—2 центнер вăрлăх илме пултарнă пулсан, иртнĕ çулта пирĕн Сĕнтервăрри районĕнче 5 центнер илекен колхозсем те пулнă. Анатри-Карабашри Прамнек йачĕпе тăракан колхозра кăçал гектартан 3,5 центнер клевер вăрри туса илнĕ. Çакăн чухлĕ тухăç та пирĕн условире пысăк тухăç шутланаť.

Клевер вăрлăхĕ тума колхозра 2 гектар хăварнă. Вăл 1936 çулта сĕлĕ çине акнăскер пулнă. Сĕлĕ акас умĕн çĕре лайăх çемçетсе тĕплĕн сухаласа кăпăшкалатнă. Клевĕре „Кроун" çейăлкăпа, гектар çине 9 килограм илсе акнă. Акнă хыççăн 1—2 сантиметр тарăнăш çăмăл сӳрепе сӳресе витĕнтернĕ. 1936 çулта çак вырăнта çурĕ виçĕ хут çумкурăксене çумласа тасатнă. Хĕлле, участкă вăрман сывăхĕнче пулнă пирки йур тытмасăрах çур метр хулăмĕш пулнă. Çавăнпа та клевер шăнса пăсăлни пулман.

Çуркунне йур кайсан, шăн типсе çитсен, çав вырăна „зиг-заг" сӳрепе 2—3 сантиметр тарăнăш кĕтесрен кĕтесе тухса сӳренĕ. Сӳренĕ хыççăн клевер калчисем уйрăмăнах патмарланса ӳсме тытăннă.

Августăн 12-мĕшĕнче вăрлăхлăх клевере çулма тухнă. Икĕ гектар çинчен пурĕ 42 урапа клевер уламĕ турттарнă. Хаlъ çапса тĕшĕленĕ хыççăн пурĕ 7 центнер таса вăрлăх тухрĕ. Гектартан 3,5 центнер. Клевер вăрлăхĕ тăвас ĕçре вĕçĕмех 2-мĕш бригадăн бригадирĕ М. Оливанов йертсе пычĕ. Хаlъ колхоз 1938 çулта Пĕтĕм Сойузри Йалхуçалăх Выставкинче пулма зайавкă пачĕ.

П. Василйев.

Тимлесе ĕçлемеле

Елĕк районĕнчи колхозсем Аслă Социалисăмлă революцин 20 çулхи уйавне пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ.

Мăн Пакăш йалĕнчи колхозра Государствă умĕнчи обйазателствăсене пĕтĕмĕшпех пурнăçлассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Тĕш тырă, сӳс, çĕрулми парса татнă. Çак кунсенче авăн çапса пĕтереççĕ.

Изванlъкăри колхозра йалхуçалăх ĕçсене ăнăçлăн вĕçлесе çитереççĕ. Государствă умĕнчи парăмсене вăхăтра парса татас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. Пĕтĕм тĕштырăсене октаберĕн 10 мĕшĕнче çапса пĕтерчĕç.

Çав хушăрах Титмăш колхозĕнче чăтма çук йапăх ĕçлеççĕ. Кунта октаберĕн 8-мĕшĕнче тин уйхиртен кĕлтесене кĕртсе пĕтерчĕç. Авăн çапас ĕçе тытăнманпа пĕрех.

Орпаш йалĕнчи „Хастар" колхозра та ĕç питĕ сӳрĕк пулса пыраť. Аслă Октабĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнман. Çавăнпа та йалхуçалăх ĕçсене чăтма çук çителĕксĕр туса пыраççĕ. Колхоз председателĕ П. Кузьмин ĕçсем хăйсен йухăмĕпе пулса пырасса шанса лараť пулмала. Авăн çапасси кайа йулса пыраť. Хĕллене хатĕрленес ĕç те йапăх пулса пыраť. Ыраш вырнă вăхăтра сыснасене валlъи ăшă вите тума тытăнначчĕ, анчах вăрман çителĕклĕ хатĕрлемен пирки ĕç чарăнса ларчĕ. Кĕрхи çĕртме пĕр гектар та сухаламан.

А. Степанов.

Йалсене пулăшма карĕç

Комсомол Чăваш Обкомĕ çумĕнчи пионерсен аслă вожатăйĕсене хатĕрлекен шкулри комсомолецсем „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине" вĕренме кружок организациленĕччĕ. Вăл кружока вĕрену çулĕ пуçлансанах тунă пулнă. Кружока А. В. Никитин йертсе пычĕ. Вăл лайăх вĕрентме тăрăшрĕ. Кружокра 53 комсомолец пулнă. Вĕсем пурте заlъатисене пĕр сиктермесĕр çӳрерĕç. Çак кунсенче кружокра вĕренекенсем хăйсен программине вĕренсе пĕтерчĕç.

Октаберĕн 17-мĕшĕнче комсомолецсен аслă пухувĕ пулчĕ. Пухура суйлав саккунне вĕренмели кружоксем туман колхозсене кайса, „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине" вĕрертес ĕçе йĕркелесси çинчен калаçрĕç. Комсомолецсем пурте пĕр сасăпах колхозсене кайса суйлав саккунне вĕренме кружоксем организацилес, „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленес ĕç мĕнле пыни çинчен çутатса стена хаçачĕсем кăларас,—тесе йышăнчĕç. Çак йышăнува пурнăça кĕртме комсомолецсем пурте пилĕк кунлăха районсене тухса карĕç.

М. Александров.

Данилов заlъатисене хатĕрленсе пымасť

Шарпашри (Тутаркас р.) „Искра" колхозра „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине" вĕренмели кружока сентабĕр уйăхĕнчех организациленĕ. Унтанпа 3 заlъати çеç пулнă. Кружока Данилов учителĕ йертсе пыраť. Вăл заlъатисене иртерме хатĕрленсе пымасť. Çавăнпа та заlъатисенче ларма кичем. Кĕнеке тăрăх вулаť-вулаť те „кĕçĕр çитет," тесе тухса кайаť. Колхозниксем кашни каçах колхоз правленине 40—50 çынран кайа мар пухăнаççĕ. Вĕсем суйлав саккунне вĕренесшĕн. Анчах Данилов вĕрентесшĕн мар, ыйтусем парсан: „çапла пуlъ," „апла пуlъ," тесех иртерсе йараť.

Д. Иванов.

Миlъутинри йывăç каскалакан заводри килхуçи арăмĕсем çĕнĕ суйлав саккунне вĕренеççĕ. Кружока М. А. Кондратйев йертсе пыраť.

Цыганов Фото-ӳкерчĕкĕ.

Восстани çинчен Маркс çапла каланисене аса илтерсе, Ленин татăклă кăтартусем панă, вăл пĕр вăхăтрах чи кирлĕ пунктсенчен наступлени тумала, вăл шутран пĕтĕм флотăн наступлени тумала, ĕçе татса паракан центрсенче пысăк вăйсем пухмала, чи кирлĕ учреждениссене йышăнса илмеле, чи кирлĕрех операцисенче хутшăнма хăйулă елементсене, пуринчен ытла—рабочи çамрăкĕсене уйăрмала, тесе кăтартнă. Çулпуçĕ çапла кăтартса панисене пурнăça кĕртес тĕлĕшпе боlъшевиксем организацилĕ ĕççене питĕ пысăккăн сарса йанă.

Революцине хĕçпăшалсăр тăратса хăварма хăтланса Керенски революцилле чаçсене Петроградран кăларса кайса, вĕсене фронта йама приказ панă.

Боlъшевиксем йертсе пыракан Петроград совечĕ Революцилĕ Çар Комитечĕ тума йышăннă, Комитет мĕн пур çар чаçĕсенче хăйĕн комиссарĕсене лартса тухнă, çав комиссарсем ирĕк памасăр пĕр приказ та пурнăçа кĕме пултарайман. Революцилĕ çарсене Петроградра хăварнă. Çар чаçĕсем пĕрин хыççăн тепри восстани йенне çавăрăннă.

Боlъшевикла пичет калама çук пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртас пулаť. Вăл пролетарилĕ революцин пушар чанĕ пулнă. Контрреволюци бандисем çĕмĕрсе тăкнă „Правда" вырăнне сентаберĕпе октаберте „Рабочий путь" хаçат тухса тăнă, вăл пирĕн партин тĕп оргăнĕ пулнă. Тĕп оргăнăн аслă редактăрĕнче Сталин йулташ ĕçленĕ. Массăсене революцилĕ боlъшевикла воспитани парас тата организацилес ĕçре, ĕççыннисене революци задачисем çинчен ăнлантарса парас ĕçре Ленинпа Сталин статйисем калама çук пысăк вырăн йышăнса тăнă.

Буржуазипе унăн тарçисем штрейкбрехерсемпе предателсем урлă —Каменевпа Зиновйев урлă боlъшевиксем восстанине хатĕрленни çинчен пĕлсен, революци штабне—боlъшевиксен партине çĕмĕрсе тăкма çийĕнчех мерăсем йышăнчĕ. Çав кунах (октаберĕн 18 мĕшĕнче) каçхине, „Новая жизнь" хаçатра Каменевпа Зиновйевăн ирсĕр, предателле доносĕ пичетленсе тухсан, боlъшевиксем хатĕрлекен восстанине пĕтерсе лартас ыйтупа Вăхăтлăх правителствă вăрттăн лару туса иртерет. Октаберĕн 19-мĕшĕнче Вăхăтлăх правителствă фронтри çарсене васкасах Петроградa чĕнсе илнĕ.

Октаберĕн 23-мĕшĕнче Вăхăтлăх правителствă „Рабочий путь" хаçатпа „Солдат" хаçата хупма тата ийулĕн 3-мĕшĕпе 4-мĕшĕнче пулнă событисене хутшăннă боlъшевиксене арĕслеме постановлени йышăннă.

Октаберĕн 24-мĕшĕнче Вăхăтлăх правителствă Революцилĕ Çар Комитечĕн ĕçне йĕрлесе тухасси çинчен приказ кăларнă. Çар округĕн штабĕ—Революцилĕ Çар Комитечĕ çар чаçĕсене лартса тухнă комиссарсене вырăнтан кăларса суда пама приказ кăларнă. Хулари чи кирлĕрех пунктсене йункерсем йышăнса илнĕ.

Революцилĕ Çар Комитечĕ контрреволюцине хирĕç тăрса „Рабочий путь" тата „Солдат" хаçатсене тепĕр хут кăларма пуçланă, типографисене сыхлама хурал организациленĕ, революци майлă тăракан гарнизонти мĕн пур çар чаçĕсене çапăçува хатĕрленĕ.

Октаберĕн 24-мĕшĕнче (нойаберĕн 6-мĕшĕнче) каçхине Ленин Смоlънăйа пыраť те, Сталин йулташпа пĕрле восстанине хăй йертсе пыраť. Кунтах вăл питĕ хĕрӳлĕ çыру—„Тĕпком членĕсем патне çыру" çыраť, унта вăл „Кирек мĕнле пулсан та, пайан каçхине, пайан çĕрле йункерсене т. ыт. хĕçпăшалсăрлантарса (хирĕç тăраççĕ пулсан, çĕнтерсе) правителствăна арĕслемеле.

Кĕтме йурамасť!! Пурне те çухатма пулаť!!!" (Ленин, т. XXI, стр. 362),—тесе чĕнет.

Ленина Сталин йулташ хĕрӳлĕн пулăшаť. Восстани ыран тенĕ чух „Рабочий путь" хаçатра пичетленсе тухнă хăйĕн „Мĕн кирлĕ пире" йатлă статйинче Сталин йулташ çыраť:

„Çакăн пек самана çитрĕ: тата та вăраха хăварни революцин пĕтĕм ĕçне пĕтерсе хурас хăрушлăх пур. Помещиксемпе капиталиссен хаlъхи правителстви вырăнне рабочисемпе хресченсен çĕнĕ правителстви туса лартмала.

Халăх суйламан, халăх умĕнче ответ тытман хăйне-хăй правителствă текен хаlъхи правителствă вырăнне халăх йышăннă, рабочисен, салтаксен тата хресченсен представителĕсем суйланă тата çав представителĕсем умĕнче ответ тытакан правителствă туса лартмала" („Рабочий путь", №-44, 1917 çулхи октаберĕн 24-мĕш (нойаберĕн 6-мĕш).

Октаберĕн 25-мĕшĕнче (нойаберĕн 7-мĕшĕнче) Хĕрлĕ гвардипе революцилĕ çарсем Петроградра правителствăн паллă учрежденийĕсене, вокзалсене, почтăна, телеграфа йышăнса илнĕ. Смоlънăй революцин тĕп штабĕ пулса тăнă, унтан çапăçу приказĕсем тухнă, унтан Хĕрлĕ гварди хĕçпăшалланнă. Петроградри рабочисем, çав кун, боlъшевикла парти йертсе пынипе, хăйсем лайăх шкул витĕр тухнине кăтартрĕç. Боlъшевиксем ĕçленипе восстанине хатĕрленнĕ революцилĕ чаçсем çапăçу приказĕсене тĕрĕс пурнăça кĕртнĕ, Хĕрлĕ гвардипе пĕрле çумма-çумăн тăрса çапăçнă.

Восстанире Кронштадтри матроссем пысăк вырăн йышăннă. „Аврора" крейсер октаберĕн 25-мĕшĕнче тупăсенчен персе аçа-çиçĕм пек çĕмĕрсе, çĕнĕ тапхăр—пролетарилĕ социалисăмлă революци тапхăрĕ пуçланни çинчен пĕлтернĕ. Вăхăтлăх правителствăна çĕмĕрсе тăкнă. Хĕрлĕ гварди отрйачĕ Вăхăтлăх правителствăна Зимний дворецра арĕслет.

Революцине хатĕрленес, ăна йертсе пырас пĕтĕм ĕçе пĕр парти, революцин генилĕ стратегĕсем, аслă маçтăрĕсем—Ленинпа Сталин йертсе пыракан боlъшевикла парти тунă.

Парти контрреволюционерсене—меншевиксемпе ес-ерсене тата вĕсен ирсĕр йыттисене—троцкислазиновйевла тата сылтăм оппортунисла предателсене çĕмĕрсе тăкса, рабочи класа çĕнтерӳ пачĕ.

Троцкий, Зиновйев, Каменев, Рыков, Бухарин—çав контрреволюцилĕ буржуазин ирсĕр лакейĕсем—капиталисăма сыхласа хăварас шутпа пролетарилĕ революцин çĕнтерĕвне пĕтерсе лартма хăтланнă. Рабочи класăн вăйне шанманни, пролетарилĕ революци çĕнтерме пултарнине тата социалисăмлă обшчĕствă туса çитерме пултарнине хирĕç тăни—вĕсен пĕр платформи пулнă. Восстанине Советсен Сйесĕ уçăлнă тĕлеле пуçламала тесе калаçнипе витĕнсе, Троцкий хĕçпăшаллă восстанине хирĕç саботаж тунă, восстани хăш числара пуласси çинчен контрреволюционерсене малтанах систерсе хунă, хĕçпăшаллă выступлени тума парти палăртса хунă срука пăрахăçа кăларма тăнă.

Ленинпа Сталин Троцкин предателле тактикине тăрă шыв çине кăларнă, унăн тактики пролетариатăн хĕçпăшаллă восстанине пĕтерсе лартасси пулнă.

Парти провокатăрсемпе штрейкбрехерсене—Троцкине, Зиновйева, Каменева т. ыт. предателсене пĕр пĕччен хăварса çĕмĕрсе тăкнă, Ленинпа Сталин хатĕрленипе тунă план тăрăх çĕнтерӳлĕ хĕçпăшаллă восстани организациленĕ.

„Событисем Ленин пĕтĕмпех тĕрĕс пулнине кăтартса пачĕç. Паллă ĕнтĕ, восстанине Пĕтĕм Российăри Советсен Сйесĕччен пуçланă. Паллă ĕнтĕ, тĕрĕссипе илсен, влаçа Пĕтĕм Российăри Советсен Сйесĕ уçăличчен туртса илнĕ..." (Сталин, „Оппозици çинчен", стр. 117).

Октаберĕн 25-мĕшĕнче (нойаберĕн 7-мĕшĕнче) уçăлнă Советсен иккĕмĕш Сйесĕ Петроградри рабочисемпе салтаксен массисем çапăçса илнĕ влаçа хăй аллине йышăннă.

Социалисăмлă революци çĕнтерчĕ. Влаç ĕççыннисен аллине куçрĕ. Граждăн вăрçин вутхĕмĕнче тăшмансене çĕмĕрсе тăкса, аслă боlъшевикла парти йертсе пыракан рабочи класпа хресченсем строителствăна тытăнса социалисăмлă çĕнĕ обшчĕствă туса хучĕç. Пролетариатăн генилĕ çулпуçĕсем Ленинпа Сталин хатĕрленĕ план тăрăх, кайа йулнă çĕршыв историлĕ

(Йулашки 4-мĕш страницăра)

Сойуз Совечĕн депутатне суйламали кандидатурăсене сўтсе-йавма пухăнакан округри суйлав умĕнхи канашлусене представителсем суйлаççĕ

Октаберĕн 21-мĕшĕнче Мускаври чылай предприйатисенче: инструментсем тăвакан заводра, „Освобожденный труд“, „Манометр“ фабриксенче, 1 №-лĕ атă-пушмак тăвакан фабрикра, велосипед тăвакан заводра тата ытти предприйатисенче те Сойуз Совечĕн депутатне суйламали кандидатурăсене сўтсе-йавма пухăнакан округри суйлав умĕнхи канашлусене йама представителсем суйлас тĕлĕшпе пухусем пулса иртнĕ.

Мускаври инструментсем тăвакан заводри рабочисем, инженерла-техникла работниксем тата служăщисем канашлува йама хăйсен представителĕсене тĕплĕн сўтсе-йавса суйланă. Канашлува кайакан представителсен завод коллективĕ нысăккăн шанса панине пурнăçа кěртмеле, Сталин суйлав округĕнчи нумай нысăк заводсем Сойуз Совечĕн депутатне суйламали кандидатурăна халăхсен çулпуçне Сталин йулташа тăратма сĕннине хута кĕмеле. Заводри Орлов, Александров тата Цветков стахановецсем куллен кирлĕ таварсем тăвакан цехри слесăр-инструментальщика А. Д. Кошелев комсомолеца пĕррремĕш кандидата тăратаççĕ.

Завод рабочисем хăйсен пĕррремĕш кандидатне рабочи клас ĕçне вĕçне çитичченех парăнна лайăх общественник тата йулташ тесе хаклаççĕ. Пуху ыйтнипе Кошелев йулташ хăйĕн биографине каласа парать. Унăн биографийĕ—совет çĕршывĕ ыввăлĕн биографийĕ, вăл совет влаçĕ пулăшнипе культурăна политика тĕлĕшĕнчен çктĕннĕ, квалификаци илнĕ, столицăри заводра малта пыракан çын пулса тăнă. Пуху хăйĕн пĕррремĕш кандидатне пĕр сăсăпах çирĕплетет.

Пухува пынă çынсем ытти кандидатурăсене те хĕрўлĕ тата тĕплĕ сўтсе йавнă.

„Пире телейлĕ хавасла пурнăç панă, халăхсен усал тăшманĕсене тимĕр алăпа çапса салатнă, пирĕн çĕршыва пултаракан тата никам сĕнтерейми держава туса хунă кандидатурăшăн — Иосиф Виссарионович Сталиншăн пĕтĕм большевикла хĕрўлĕхпе çине тăрăр“, — тесе завод коллективĕ хăйĕн ултă представителне наказ панă.

„Освобожденный труд“ фабрикăн рабочисемпе работницисем округри суйлав умĕнхи канашлува пилĕк представител суйланă. Вĕсен хушшинче — фабрикăн ватă кадрăвăй рабочийĕ производствăра 37 çул ĕçлекен Заморенов Степан Георгийевич, лайăх ĕçлекен ткачиха Федотова стаханăвка, фабрикăн партком секретарĕ Гудкина.

Ватă работница Агафонова стаханăвка пухура çапла каланă:

— Епĕр округри канашлува вĕсне çитиччченех тĕрĕсленнĕ йулташсене суйларăмăр тата вĕсене канашлура пирĕн фабрикри рабочисем пурте пĕр çын пекех, пире çĕнтерў хыççăн çĕнтерўсем патне йертсе пыракан йуратнă çулпуçшăн сасăланине пĕлтерме наказ паратпăр.

Пухура тухса калаçакансем пурте Сойуз Совечĕн депутатне суйлама халăхсен аслă çулпуçĕн Иосиф Виссарионович Сталин кандидатурине тăратнине хаваслансах хута кĕреççĕ. Сталин йатне кашниннех хаваслансах алă çупса саламлаççĕ.

„Манометр“ завочĕн тата 1 №-лĕ атă-пушмак тăвакан фабрикĕн коллективĕсен пухувĕсенче рабочисем халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташăн соратникĕн Молотов йулташăн кандидатурине хĕрўлĕ хута кĕнĕ.

„Манометр“ заводĕнчи пин те ултçĕр çын ытла пухăннă пухура Молотов суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлува пилĕк представител суйланă. Представителсене — производствăра 57 çул ĕçленĕ заводри ватă рабочийе Громов йулташа, партком секретарне Кондратйев йулташа слесăр-стахановеца Баланов йулташа, шăратакан цехăн плановикне Пантелейев йулташа, бригадир-комсомолкăна Гусева йулташа пĕр сасăпах суйланă.

1 №-лĕ атă-пушмак тăвакан фабрик коллективĕ суйлав умĕнхи канашлува виçĕ представител суйланă.

Пухура пулнисем хăйсен представителĕсене Молотов суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлура ĕçре пиçнĕ, коммунисăм ĕçĕшĕн пĕтĕм чĕререн кĕрешĕкен борецăн Вйачеслав Михайлович Молотов кандидатурине пур майпа та хута кĕме наказ панă.

Мускаври велосипед тăвакан заводри рабочисемпе служăщиксен пухувĕнче Пролетари суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлува 21 представител суйланă. Коллектив вĕсене Сойуз Совечĕн депутатне суйлама тăратнă Таганск райсовет председателĕн Пичугина йулташăн кандидатуришĕн активлă тăма хушнă.

Октаберĕн 21-мĕшĕнче Ленинградăн Мускав, Красногвардейски, Володарски суйлав округĕсенчи пысăк предприйатисенче пухусем пулса иртнĕ. Вăл пухусенче рабочисем, служăщисем инженерла-техникла работниксем Сойуз Совечĕн депутачĕсене суйламали кандидатурăсене сўтсе-йавма пухăнакан округри суйлав умĕнхи канашлува представителсем суйланă.

Пухусем пысăк çĕкленўпе иртнĕ. Кашни тухса калаканичен ответлăх, тўрĕлĕх, представителсене суйласси пысăк вырăн йышăннине систернĕ.

Ленинградри Свердлов йачĕпе тăракан станоксем тăвакан заводри рабочисен, инженерла-техникла работникĕсен, служăщисен 2 пинлĕ коллективĕ 40 представител суйланă. Пурте вĕсем Ленин—Сталин партийĕн, вăйне хурса ĕçлекен стахановецсем.

Ленинградри Карл Маркс йачĕпе тăракан заводра икĕ пин ытла рабочи, инженер тата служăщи пухăннă. Пуху Сталин йачĕпе тăракан металл завочĕ тата ОГПУ йачĕпе тăракан оптикă завочĕ Красногвардейски суйлав округĕнчен Сойуз Совечĕн депутатне суйлама Михаил Иванович Калинин кандидатурине тăратма йышăннă решенине пĕр сасăпах ырланă.

(ТАСС).

ССР Сойузĕн Тĕпĕçтăвкомĕ Аслă Совет суйлавĕн срокĕ çинчен йышăннă постановленине ырласа иртнĕ Чăвашполиграфтресчĕн типографинчи (Шупашкар) рабочисен митингĕ.

Цыганов фото-ўкерчĕкĕ.

Чăваш халăхĕн концерчĕ

Октаберĕн 22-мĕш кунĕнче, Шупашкарти пионерсен çуртĕнче савăнăçлă та интереслĕ концерт пулчĕ. Концерта Чăваш радиокомитечĕ республикăри 2-мĕш радиофестивальре палăрнă чи лайăх художествăллă пултарулăх коллективĕсемпе уйрăм исполнителсене чĕнсе организацилене.

Калас пулат, кун пек тулли содержанилĕ, савăнăçлă концертсене Шупашкар сайра курнă. Концерт 15 кун хушши пынă радиофестивалĕн итогĕсене, унăн тивĕçлĕхне уççăн кăтартса парат.

Чăваш халăхĕн йурри-сăввисен чăн-чăн парачĕ пек пулса иртрĕ радиофестиваль. Вăл художествăллă пултарулăх коллективĕсен членĕсемпе уйрăм исполнителсем хушшинче кăна мар, республикăри пур радиоитлекен массăсем хушшинче те калама çук пысăк хускану пачĕ. Радиофестивале ăнăçлăн иртерес ĕçре, смотрсем умĕн пулса иртнĕ организацилĕ ĕççенче парти райкомĕсемпе йалсовет председателĕсем тăрăшса ĕçлени пысăк пулăшу пачĕ.

Йалсоветсемпе предприйатисенче пулса иртнĕ массăллă художествăлла пултарулăх смотрĕсем, пултарулăх кружокĕсемпе уйрăм исполнителсене нумай палăртрĕç. Вĕсем фестивальре микрофон умне тăрас умĕн виçшер хут смотр витĕр тухса тĕрĕсленнĕ. Фестивальре тухнă республикăри 25 район тата 6 хула выступленийĕсенче чи лайăх исполнителсем—мĕн пурĕ 3 пин те 900 çын хăйсен пултарулăхне кăтартнă. Вăл шутра хор коллективĕсем—134, хĕлĕхлĕ оркестрсем—39, шавлă оркестрсем—13, духовой оркестрсем—5 тата тĕрлĕ йышши уйрăм исполнителсем—183 çын.

Кунта çакна çеç калас пулат, Сталинла Конституци тăрăх ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлас умĕн, Аслă Социалисăмлă революци 20 çул тултарнă йатпа иртернĕ радиофестиваль Октабĕр уйавĕн кунĕсене культурлăн та савăнăçлăн кĕтсе илсе уйавлассинче тата художествăлла пултарулăха малашне ўсме вăй парас ĕçре республикăри пĕтĕм общественнăçăн активлăхне çĕклерĕ.

Креçе сухаллă стариксем тата ватă карчăксем пурнăç хаваслăхĕпе çунатланса, темиçе çĕр çынлă хула аудиторийĕ умĕнче тухса хорпа пĕрле ура хуçса ташлани савăнтарат те хавхалантарат. Пирĕн социалисăмлă çĕршывра „çамрăксене-кирек ăçта та çул уçă, ватă çынсене—кирек-ăçта та хисеп“.

Çавăн пек савăнăçлăх йурри-сăввисемпе тухрĕç концертри пултарулăх коллективĕсемпе уйрăм исполнителсем.

Уйрăмăн илсен, концертра 4 хор, пĕр хĕлĕхлĕ оркестр, пĕччен йурлакансем—13 çын, пĕтĕмпе 160 çын пулчĕ.

Хор коллективĕсем: Иванăвари колхоз хорĕ (Çĕрпў р.), Çĕмĕрлери комбинат хорĕ, Кĕçĕн-Маклашкинă колхоз хорĕ (Сентĕрвăрри р-нĕ), Шупашкарти çĕвĕ çĕлекен ертел хорĕ—маçтăрлăх тĕлĕшĕнчен пĕри те начар мар. Кунта уйрăмăнах икĕ хор пирки ăрасна палăртса калама тивет. Çĕмĕрлери комбинат хорĕ хăйĕн дирижорĕ Лебедев çырнă йурăсене йурлани ытла та килĕшрĕ. „Çывăхран та çывăх Сталин“ йуррăн Лебедев çырнă музыкĕ Лисков çырнинчен аванрах, ăшăрах, лирикăлăрах туйăнса тăрат. Ку музыкăна хальтерех пичетлесе кăларса республикăри пур хорсем патне те çитермеле. Унтан Кĕçĕн-Маклашкинă колхоз хорĕ (дирижорĕ Тогайев йулташ) пирĕн хорсен пултарулăхне çĕнĕ майсем кĕртет.

Вăл йуррăн ăш-чикне лайăх ăнланса, оперăри йевĕрлĕ кăларат („Вăйă“ йурă). Çĕнĕлĕх, творчествăлă пуçарулăх тата çĕкленў тĕлĕшĕпе Тогайев хорĕнчен ытти колхоз хорĕсем кăна мар, Чăваш патшалăх хорĕн те вĕренмеле, унтан пример илмеле.

Пĕччен йурлакансем те, çавăн пекех, пирĕн пултарулă халăх хушшинчен талантсем ахах пек çуталса тухнине, пирĕн çĕршыв талантсен çĕршывĕ пулса тăнине уççăн кăтартса параççĕ. Карачаровский, Бениенко (Улатăр хулинчен), Есливанов (Куславккаран), Бельакова (Шупашкартан), Соколова, Рудзит Лайма, Злодийев (Çĕмĕрлерен), Галийева (Куславкка р-чен) йурланисене çакăн пек хак пама пулат: кăкăр тулли сывлăхлă та йантравлă сасă тата ытарма çук маçтăрлăх! Пурин те пекех репертуарĕнче класçикла йурăсем пур. Карачаровский, Бениенко, Соколова тата Есливанов хăш-пĕр йенчен пирĕн хушăмăрти профессионаллă йурă ăстисенчен пĕртте кайа мар, вĕсенчен çўлерех тăракан йенĕсем пур тесен те, ўстерсе калани пулмаст.

Концерт-интернационаллă йурă-сăвă уйавĕ пулса тăчĕ. Кун пек концертсене малашне час-часах организацилемеле. Çавăн пек пулчĕ залăра итлесе ларнă тăп-тулли халăхăн кăмăлĕ.

Йакку Арслан.

Чăваш АСС Республик Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн октаберĕн 20-мĕшне кĕрхи çĕртме сухаласси мĕнле пынине кăтартакан

СВОДКИ

РАЙОНСЕМ	Плана тултарнă (процентпа)	Вăл шутран трактăрсемпе сухаланă: План тăрăх гектарпа	Плана тултарнă гектарпа	Плана тултарнă (процентпа)
Улатăр	74,2	6600	4970	75,3
Елĕк	39,4	9600	3357	34,9
Патăрйел	61,2	10780	8794	81,5
Вăрнар	66,6	10450	8964	85,7
Йĕпреç	63,2	8000	5260	55,8
Ишлей	67,1	9300	6393	68.7
Канаш	52,2	9500	4043	53,9
Куславкка	82,2	9965	4898	49,2
Кувакинă	106,7	10750	10762	100
Хĕрлĕ Чутай	43,5	—	—	—
Сĕнтĕрвăрри	70,0	—	—	—
Пăрачкав	58,1	9000	6865	76,2
Турхан	51,7	—	—	—
Тутаркас	91,1	7960	7957	99,9
Трак	68,9	11570	6350	54,8
Вăрмар	57,2	14000	8501	53,5
Çĕрпў	71,3	13000	6778	52,1
Шупашкар	66.4	7500	4833	64,4
Шăмăршă	47,0	—	—	—
Шăхасан	63,3	10900	7094	65,8
Шăнкăртам	89,7	—	—	—
Çĕмĕрле	46,4	—	—	—
Йетĕрне	73,0	—	—	—
Йелчĕк	67,8	14030	10770	76,8
Тăвай	85,1	8495	8580	101,0
ЧАССР-пе	66,2	179400	125169	69,8

Асăрхаттарни: Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн учотпа-статистика пайĕн айĕпĕ пирки, октаберĕн 15-мĕшне пичетленĕ сводкăра Шупашкар районĕ тăрăх 63,0 процент вырăнне 75,6 процент, Шăнкăртам районĕ тăрăх 71 процент вырăнне 94,6 процент çапăнса тухнă.

Калавсемпе новеллăсен конкурсĕ

Чăваш Совет писателĕсен Сойузĕ йулашки вăхăтра туса иртернĕ массăллă йурăсен конкурсĕ поэтсене массăллă йурăсем çырас ĕçе мобилизацилеме тата çĕнĕ авторсене палăртма пулăшрĕ.

Çавна шута илсе, малашне калавсем тата новеллăсем çырас ĕçе çĕклесе йама, унпа пĕрлех прозă çинче ĕçлекен çĕнĕ авторсене палăртса пырас майпа, Писателсен Сойузĕн Правленийĕ октаберĕн 19-мĕшĕнче пулса иртнĕ ларăвĕнче калавсемпе новеллăсен конкурсĕ туса иртерме йышăнчĕ.

Конкурс çак кунран пуçласа декаберĕн 15-мĕшĕччен пырат.

Конкурса тăратмали калавсемпе новеллăсем чи малтан пирĕн совет çĕршывĕн пайанхи пурнăçне, пайанхи ўсĕмне кăтартмала. Уйрăм темăсĕм нумай пулма пултараççĕ. Çĕнĕ социалисăмла хула, çĕнĕ колхозлă йал. Рабочисен, колхозниксен, совет интеллигенцийĕн тулли хаваслă, пултарулă пурнăçĕ. Ленин—Сталин партийĕн çĕнтерĕвĕсем. Аслă социалисăм строительствинче ўстерсе аталантарнă совет çыннисем, совет паттăрĕсем. Пирĕн çамрăксем, ачасем. Сталинла Конституци. Ĕмĕрсен ĕмĕтне пурнăçланă социалисăм çĕршывĕ. Аслă Совета суйлани. Халăх тăшманĕсене çĕмĕрсе тăкни. Çĕршыва сыхлас ĕç. Мухтавлă хĕрлĕ çар пурнăçĕ. Урăх çĕршыври пролетариатпа хресченсен революцилĕ кĕрешĕвĕ. Тĕне хирĕç калавсем. Совет çĕршывĕ—пĕртан, ирĕклĕ, телейлĕ тăван халăхсен çĕршывĕ. Ирĕклĕ халăхсен пурнăçĕ т. ыт. те.

Калавсемпе новеллăсем идейлăх тĕлĕшĕпе, художествăлă пахалăх тĕлĕшпе çўлте тăмала, пурне те ăнланмала, пуйан та илемлĕ чĕлхепе çырнăскерсем пулмала.

Новеллăсем çырас тĕлĕшпе пирĕн авторсем халиччен пачах та ĕçлемен тесен те тĕрĕс пулат. Ку ĕçе пирĕн çĕнĕрен çине тăрсах пуçарса йамала.

Конкурса тăратнă произведенисем пĕр пичетлĕ листаран пысăк мар пулмала. Произведенисене таса шурă хут çине, пĕр йенне вулама уçăмлă алăпа çырса йамала. Алçырăвĕ çинче авторăн хăй йатне, хушаматне çырмала мар, девиз лартмала. Автор камне пĕлтерсе уйрăм конверт ăшне хут çырса чиксе йамала. Вăл конверт çинче те авторĕн девизĕ тăмала.

Чи аван калавсемшĕн, новеллăсемшĕн çакăн пек премисем параççĕ:

1-мĕш премисем—иккĕ—500-шер тенкĕ.

2-мĕш—виççĕ—300-шер тенкĕ.

3-мĕш—пилĕк—200-шер тенкĕ.

Произведенисене çак адрĕспа йамала:

Чувашская АССР, г. Чебоксары, Дом печати, Правление Союза Писателей, жюри Конкурса на рассказы и новеллы. Уйăп Мишши.

ИЗВЕЩЕНИЕ

25 октября 1937 г. в Центральном доме партпросвещения в 6 часов вечера состоится для пропагандистов, агитаторов партийно-комсомольской сети города и докладчиков доклад на тему—Международное положение к XX годовщине Великой Октябрьской социалистической революции.

Докладчик т. Варламов Е. Е.

Явка для всех пропагандистов, агитаторов и докладчиков обязательна.

Городской Комитет ВКП(б)
Дом партпроса.

Аллă çын пуçне пĕр медицинă работникĕ

КУСЛАВККА. Район талкишĕнче ĕлĕк—Октабĕр революци пуличчен, сывалмали çурт таврашсем, пĕр больницăсăр пуçне урăх нимĕн те пулман.

Халĕ районра виçĕ больница. Вĕсенчен пĕри—Çĕн Салари больница республикĕпе паллă. Кунсăр пуçне тата 4 амбулатори, 42 трахпункт, шăл, сивле чирĕсенчен сыватмали пунктсем пур.

Медицинă работникĕсен йышĕ те хытă ўсет. Ĕлĕк мĕн пурĕ те 2 врач çеç пулнă пулсан, халĕ 11 врач, 8 фельдшер, 12 акушеркă, 41 трахработник. Çестрасемпе пĕрле шутласан, районри медицинă работникĕсен хисепĕ 90 çынна çитет. Урăхла каласан: районра кашни 50 çын пуçне пĕр медицинă работникĕ.

Районра 2 акушеркă пункчĕ пур. Йăвăрçын хĕрарăмсем ача тума тĕшмĕш карчăксем патне мар, акушеркăсен çуртне кайаççĕ. 1936 çулта ачасем çуратнă хисепрен çуррине йахăн акушеркă пункчĕсенче çуратнă. Вĕсенчен нумайĕшне ыраттармала мар меслетсемпе çураттарнă.

Халăхăн ĕмĕрхи инкекĕ—трахом пĕтсех пырат. Вăл призыва кĕрекен çамрăксем хушшинче уйрăмăнах палăрат. 1912 çулта çуралнă çамрăксем хушшинче трахомлисем 25,4 проценг пулнă. 1913 çулта çуралнисем хушшинче—18,8 проц., 1914 çулта çуралнисем хушшинче—14,7 проц., 1915 çулта çуралнисем хушшинче—11,4 процент, 1917 çулта çуралнисем хушшинче—7,7 процент пулнă, 1918 çулта çуралнă çамрăксем хушшинче трахомлисем мĕн пурĕ те 6,7 процент кăна шутланнă.

Цифăр чĕлхи—витĕмлĕ, ĕненмеле. Цифăрсем вĕсем—хăйсем çинчен хăйсемех илемлĕн каласа параççĕ. Çавăнпа та çак цифăрсем мĕнле пысăк утăмсем тунине кăтартни çинчен калама сăмах та кирлĕ мар.

И. Алтын Баш.

Октаберти восстани

(Йулашки)

чи кĕске срукрах хăватлă индустрилĕ, малта пыракан техникăпа хĕçпăшалланнă, тĕнчери чи шултра йалхуçалăхлă çĕршыв пулса тăчĕ. Совет Сойузĕ социалисăмăн никам пырса тĕкĕнейми крепаçĕ пулса тăчĕ, унăн чиккисене никам çĕнтерейми Хĕрлĕ Çар çивĕччĕн сыхласа тăрат. Паттăр большевикла партипе аслă çулпуç Сталин йулташ йертсе пыракан совет халăхĕ малашнехи çĕнтерўсемшĕн кĕрешме тулли кăмăлпа йалавах хатĕр тăрат.

Ĕçхалăхĕн тăшманĕсем—фашиссем тата вĕсен агентури троцкисла-бухаринла шпионла йăхйахсем епĕр çĕнтерўлĕн малала пынине чăрмантарма пултараймĕç.

Партипе ĕççынни массисем троцкиссен тата сылтăм изменниксен шпионла йăвисене нумай тăрă шыв çине кăларса çĕмĕрсе тăкрĕç. Халăх тăшманĕсене пер хĕрхенмесĕр нимĕн хăвармиччен пĕтерсе пырăпăр. Социалисăм çĕршывĕнчи ĕççыннисем коммунисăм тăтăклăнах çĕнтересси патне хăйулăн та шанчăклăн малала пыраççĕ.

Йем. Йарославский.

„Петр I“ Çĕмĕрлере

Октаберĕн 11—12—13—14-мĕшĕсенче Çĕмĕрлери С. П. Петров йулташ йачĕпе тăракан комбинатăн çулахи театрĕнче „Петр I-мĕш“ кинокартинăна кăтартрĕç. Малтанхи икĕ кун хушшинче ку картинăна курма 1900 çын пынă пулнă. Пĕтĕмпе 4 кун хушшинче 3.500 çынна йахăн курнă. Картинăна курма пыракансем пурте ырлаççĕ.

Германи Италири пăлхавçăсене валльи вăрçă хатĕрĕсем нумай йарат

ЛОНДОН, 21-Х (ТАСС). Англири „Ньюс Кроникл“ хаçат пĕлтернĕ тăрăх, иртнĕ ерне Германи Испанири пăлхавçăсене валльи вăрçă хатĕрĕсем халиччченхинчен чылай нумайраххăн йанă.

Гамбургра пароходсем çине, Испанири пăлхавçăсене валльи йама, çĕр хутах вăрçă хатĕрĕсем тийеççĕ. Унсăр пуçне Штеттин порт урлă тата Австри урлă Италийе кайакан чукунçулсем тăрăх та вăрçă хатĕрĕсем пит нумай йараççĕ. Октаберĕн пĕррремĕшĕнчен пуçласа тăваттăмĕшне çитиччен „Софи Рикмерс“ пароход çине сиктерекен йапаласем икĕ пин тонна тийенĕ. Çав грузăн пĕр пайне Испанири пăлхавçăсене валльи, тепĕр пайне — Йапонийе йараççĕ.

Йапонири çĕнĕ мобилизаци

ЛОНДОН, октаберĕн 21-мĕш (ТАСС). „Дейли Геральд“ хаçатăн Шанхайри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: лайăх пĕлсе тăракан йутçĕршыв çар çыннисенчен илнĕ сведенисем тăрăх, Йапони халĕ Ази çĕрĕ çине йама тата тепĕр мĕлйун çын мобилизацилет. Çур мĕлйун ытларах Манчжурипе Корейăна йарат. Çапла шутлаççĕ: Йапони ĕнтĕ континентра пĕр мĕлйун ытла çар тытат. Çурçĕр Китайри вăрçă çарсене хытă тĕреклетме хушат пулин те, Йапони тимлĕхĕнче Манчжури çаплах пĕррремĕш вырăн йышăнса тăрат. „Йапони,—тесе çырат малала корреспондент,—економикăлă катастрофăран хăтăлас шутпа мĕн пур майсемпе хăвăртрах çĕнтерес тесе, континента çав тери пысăк резервсем куçарат“. Йапони çарĕсем нимне-мĕнне пăхса тăмасăр Бейпин-Ханькоу тата Таньцзин-Пукоу чукунçулĕсем тăрăх кăнтăр йеннеле шуса пыни ĕнтĕ хăвăртрах çĕнтерме тăрăшнинчен килет. Корреспондент шутланă тăрăх кăçалхи ийуль уйăхĕнчен пуçласа Шанхай фрончĕпе Çурçĕр Китайра Йапонин 55 çын пĕтнĕ.

Ответлă редактăр П. И. ИВАНОВ

Кăçал, октаберĕн 27-мĕшĕнчен пуçласа нойаберĕн 5-мĕшĕччен

Шупашкарта Чапайев поçолкинче

РЕСПУБЛИКĂРИ КĔРКУННЕХИ ЙАРМĂРКĂ

Суту-илў организацийĕсем 2 мĕлйун тенкĕлĕх ытла промышлĕннăç тата апат-çимĕç таварĕсем кўрсе килеççĕ

Колхозсене, колхозниксене тата уйрăм хуçалăхлă хресченсене йалхуçалăх продукцисемпе килме чĕнеççĕ.

Пур справкăсем тăрăх Горвнуторгран ыйтса пĕлмеле. АДРЕС: Кадыков урамĕ, 17-мĕш № çурт, Хула совечĕ. Телефон 4—88.

Йармăркă комиççийĕ

„Чăваш Коммунĕ“ çырăнса илмели хак сем; 12 уйăха — 30 т. 6 уйăха — 15 т. 3 уйăха — 7 т. 50 пус 1 уйăха — 2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 802. Гор. Чебоксары, типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 1923. Тираж 11156. ф. 58—92 см. 1,—1п. л.